49 (4359) №,
2013, раштав, 5

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ХЫПАР

Чăваш ачисемпе çамрăкĕсен хаçачĕ

# Тантăш



6+

МАЛ ĔМĔТЛĔСКЕРСЕМ

# Уйрăлми туссем

**Саккăрмĕш класра ăс пухакан Настя Николаевăпа Наталья Андреева – вĕренӳ отличникĕсем. Шкулти общество пурнăçĕнче хастар хутшăнакан, тĕрлĕ олимпиадăпа конкурсра палăракан хĕр ачасем халĕ пĕртен пĕр ĕмĕтпе пурăнаççĕ. Шкултан ылтăн медальпе вĕренсе тухасшăн, малалла та çирĕп пĕлӳ илесшĕн.**



Унсăр пуçне вĕсем спортпа туслă. Уйрăмах волейболла выляма кăмăллаççĕ. Настя вара волейбол командин командирĕ.

– Спорта чĕререн юрататăп пулин те, пурнăça ку енĕпе çыхăнтарас тĕллевлĕ мар. Тухтăр пуласшăн. Инкеке лекнĕ çынна вăхăтра пулăшу парас килет, – паллаштарчĕ вăл хăй ĕмĕчĕпе.

– Мана вĕрентекен профессийĕ килĕшет, анчах анне полици ĕçченĕ тăвасшăн. Тĕрĕссипе, халĕ хам та хăш çула суйламаллине пĕлейместĕп. Кун пирки шутлама вăхăт пур-ха. Ара, халĕ саккăрмĕш класра кăна ăс пухатăп-çке, – тет Наталья йăл кулса.

Çитес çул хĕр ачасем «Космонавт» лагере канма пĕрле каясшăн.

– Хĕл кунĕсем хăвăрт иртсе кайĕç. Вара пирĕн юратнă вăхăт çулла çитĕ. Пĕрле лагерьте канăпăр вара, – теççĕ хавассăн вĕренӳ отличникĕсем.

***Луиза ВАСИЛЬЕВА.***

Тăвай районĕ,Тăрмăш.
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕ.**

ЙĂЛА-ЙĔРКЕ

# Йăла тени çумрах çӳрет



**«Кашни йăлан майĕ пур», – теççĕ халăхра. Мĕн авалтан пыраканскерсене пирĕн аслă ăрурисем çирĕп пăхăнма тăрăшнă. Паян вара çамрăксем те çак калама çук хаклă йĕркесене чылăй чухне пăхăнас ĕмĕтлĕ. Пахи кунта – вĕсен ку енĕпе туртăм пурри, ăна сӳнме парас мар тени.**

Ял шкулĕсенче вĕренекенсем кăна мар, хулярисем те тăван халăхăмăр йăли-йĕркипе çыхăннă тĕрлĕ уява хаваспах хутшăнаççĕ. Кăмăлтан тума тăрăшаççĕ çак ĕçе. Чылай чухне ачасем хăйсен вĕрентекенне тăван халăхăн вăл е ку йăли-йĕркипе çыхăннă пĕр-пĕр уяв ирттерме сĕнни пушшех те хавхалантарать. Ара чылай ачан ашшĕ-амăшĕ ялтан-çке е аслашшĕпе асламăшĕ, кукашшĕпе кукамăшĕ те унтах тĕпленнĕ. Кану кунĕсенче е каникул вăхăтĕнче аслисем патне каяççĕ те çак нимрен хаклă йăла-йĕрке тĕнчине кĕрсе ӳкеççĕ. Хăйсен тăрăхĕнчисене кăна мар, ыттисенне те пăхăнма тăрăшаççĕ.

Шупашкар 39-мĕш шкулти виççĕмĕш «ю» класс вĕренекенĕсем чылăйранпа ĕнтĕ чăваш йăли-йĕркипе çыхăннă уявсене хаваспах хутшăнаççĕ. Нумаях пулмасть ак вĕсен класс ертӳçи Елена Петровна Воронцова ачасене тăван халăх кун-çулĕпе паллаштарчĕ, Иван Яковлевич Яковлев пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа пачĕ. Ачасем те парăмра юлмарĕç: юрларĕç те ташларĕç, сăвă-юмах каларĕç, вăйă вылярĕç. Кашни уяв вĕренекенсене килĕшни вĕсен пит-куçĕнчен те аван палăрать. Шăпăрлансен йăл кулли, хаваслăх çиçни питех те хаклă-çке.

***Владмир ТОСКИНЕЕВ.***
**Илья КЛОЧКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Шупашкар, 39-мĕш шкул.

# Маттурсем!

УЯВ

## «Статистика асамлӑхӗ» Ҫӗньялсене те савӑнтарчӗ



Нумаях пулмасть Шупашкар районӗнчи Ҫӗньял шкулӗнче «Статистика асамлӑхӗ» викторина иртрӗ. Ӑна Раҫҫейри Тӗп Статистика комитетне йӗркеленӗренпе 150 ҫул ҫитнине тата Пӗтӗм тӗнчери статистика кунне халалланӑ. Викторинӑна раштав уйӑхӗ вӗҫлениччен республикӑри пур районта та ирттерме палӑртнӑ.



Шупашкар хӑнисем класа кӗрсен саккӑрмӗшсем хӑйсене мӗн кӗтнине тӳрех тӗшмӗртейменӗҫ те пуль. Чӑвашстат ертӳҫин ҫумӗ Людмила Николаевна Егорова сӑмах илсен нумайӑшӗн кӑсӑкланӑвӗ тата пысӑкланчӗ. «Статистика пӗлтерӗшне чылайӑшӗ ӑнланмасть те пуль. Мӗн тума кирлӗ-ха вӑл?» – калаҫӑва пуҫларӗ Людмила Николаевна. Ӑнлантарса панине ачасем питӗ тимлӗн итлерӗҫ. 2010 ҫулта иртнӗ Пӗтӗм Раҫҫейри халӑх ҫыравӗ тӗслӗхӗн вырӑнлӑ пулчӗ. Чӑваш Республикинче – виҫ ҫӗре яхӑн ял тӑрӑхӗ. Ҫавна пӗлме каллех статистика кӑтартӑвӗсем пулӑшаҫҫӗ. «Кам шухӑшласа кӑларнӑ-ши ӑна?» – ыйтмасӑр чӑтаймарӗ саккӑрмӗшсенчен пӗри. Чӑнах та, ҫын шутне палӑртасси ӗлӗк-авалах, пирӗн эрӑччен пуҫланнӑ. Ҫак ӗҫе налук пухас тӗлӗшпе йӗркелесе янӑ иккен. Анчах пуҫаруҫи кам пулни паллӑ мар. Николай Гоголӗн «Вилӗ чунсем» поэминче те ҫын шучӗ пирки сӑмах пырать. Эппин, ҫак тема ачасемшӗн ют пулас ҫук.

Викторинӑн тӗп тӗллевӗ – вӗренекенсем статистика ӗҫӗ-хӗлӗ пирки мӗн пӗлнине тӗрӗслесси, кӑсӑкланӑвне пысӑклатасси.

Хуравсене тӗрӗслес ӗҫе Вӗрентӳ министерствин ӗҫченӗ Ирина Валерьяновна Юркина хутшӑнчӗ. Чи нумай балл пухса Артем Матросов ҫӗнтерчӗ. Ирина Николаевна ӑна сӑн ӳкерчӗк лартмалли электрон хашакпа чысларӗ. Максим Андреев – иккӗмӗш, Михаил Николаев 3-мӗш вырӑнсем йышӑнчӗҫ. Вӗсене – «Тантӑш» хаҫатран парне – ҫур ҫуллӑх ҫырӑнтару. Эппин, юратнӑ кӑларӑмпа ҫыхӑну татах та ҫирӗпленӗ.

Вӗренекенсене ҫак тӗл пулу питӗ савӑнтарчӗ. Малашне вӗсем статистика кӑтартӑвӗсемпе интересленсех тӑрӗҫ.

ТӐВАНСЕМ

## Хастарсем виҫҫӗшӗ те тӑван



***Районта иртекен предмет олимпиадисене Шетмӗпуҫсем хастар хутшӑнаҫҫӗ. 6-мӗш класра ӑс пухакан Диана Волкова, Галина Максимова тата Анатолий Челябин шкул чысне хӳтӗлеме яланах хатӗр. Математика пӗлӗвӗн кӑҫалхи ӑмӑртӑвӗнче те хастарлӑхпа палӑрчӗҫ. Николай Иванович Петров вӗрентекен вӗсене мӗн тери тӗплӗ хатӗрленӗ-ҫке. Тест ӗҫне те нумай пурнӑҫланӑ.***

Диана Волкова – питӗ хаваслӑ хӗр ача. Математикӑра – чи хастаррисенчен пӗри. «Кенгуру» конкурсра шкулта 3-мӗш вырӑн йышӑннӑ вӑл. Пӗрре те ахаль ларма юратман хӗр ача республикӑри «Ял чӗкеҫӗ» акцие хутшӑннӑ, ялта миҫе чӗкеҫ йӑви пулнине шутласа кӑларнӑ.

Илемлӗ саслӑскер сӑвӑ вуланӑ вӑхӑтра итлекенсем киленсе кӑна лараҫҫӗ. Кӑмӑл лайӑх чухне пӗр-пӗр юрӑ итлесен хӑй те ҫавӑн пекреххине шухӑшласа кӑларма юратать.

Маттур хӗр ача тумтир те ҫӗлеме пултарать. Яна Абрамова тусӗпе пӗрле тем те пӗр ӑсталаҫҫӗ. Сумка ҫыхасси те хӑйне май кӑсӑклӑ ӗҫ пек туйӑнать.

«Нумай-нумай укҫа пухса хамӑр шкул вырӑнне пысӑкраххине тата илемлӗреххине тӑвас килет», – тет Диана ҫутӑ ӗмӗтпе ҫунатланнӑ май.

Тусӗ пекех Галя Максимова та математика задачисене шутлама юратать. Ҫыхма та ӑста вӑл. Юлташне пукан ҫине хумалли хатӗр ӑсталаса парнеленӗ. Виҫҫӗмӗш класра чухне асламӑшӗ калпак ҫыхма вӗрентнӗ. Халӗ ҫак ӗҫе те юратса пурнӑҫлать хӗр пӗрчи.

Шашкӑлла выляма та юратать Галина. Шкулта маттуррсенчен пӗри вӑл. Ҫак спорт тӗсӗ ӑс-тӑна ӗҫлеттерме аван пулӑшать-ҫке.

Галинӑпа аппӑшӗ иккӗшӗ те ӳкерме юратаҫҫӗ. Хӗр ачасем тӑрӑшнипе килӗнчи стенасем юмах тӗнчине ҫаврӑннӑ.

Анатолий Челябин вара математика урокне юратнисӗр пуҫне литературӑна та кӑмӑллать. «Пирӗн шкулти чаплӑ сӑвӑҫ вӑл», – теҫҫӗ ун пирки хӗр ачасем. Арҫын ача сӑвӑ халалласа пӗрмаях ҫывӑх ҫыннисен кӑмӑлне ҫӗклет. Хушамачӗ паллӑ хула ятне аса илтернӗ пек туйӑнмасть-и? Эпӗ те ҫавӑнпа интереслӗнмесӗр чӑтаймарӑм. Хӑй вӑхӑтӗнче Тольӑн мӑн аслашшӗ Челябинска ҫитсе курнӑ пулнӑ. Суту-илӳ ӗҫне тӗшмӗртме пуҫланӑскер ҫак хулара нумай тавар туяннӑ та тӑван ене таврӑнсан ҫынсене унччен курман япаласемпе тивӗҫтерме пуҫланӑ.

Районти ӑмӑртусене тухса ҫӳренӗ май тем тӗрлӗ лару-тӑрӑва та лекме пулать-ҫке. Акӑ ҫамрӑк инспекторсен конкурснех илер. Унта питӗ интереслӗ пулнӑ. «Хӑрушсӑрлӑх урапи» вӑйӑра вара пӗр ӑнӑҫсӑр самант сиксе тухнӑ. Шетмӗпуҫсен велосипед пулман. Юлташсем йывӑр самантра тупӑнаҫҫӗ-и-ха? Юрать, Йӳҫкассисем хӑйсен велосипедне парса пулӑшнӑ. Ҫак пулӑм хыҫҫӑн икӗ шкул хушшинчи туслӑх тата вӑйланнӑ. Халӗ пӗр-пӗрин ӗҫӗ-хӗлӗпе кӑсӑклансах тӑраҫҫӗ.

Шӑпӑрлансем чӗвӗл-чӗвӗл чӗлхипе тем каласа та тӗлӗнтерчӗҫ. Вӗсен пӗр пеклӗх нумаййине кура: «Эсир тӑвансем мар-и?» – терӗм шӳтле-шӳтлех. «Чӑнах та, темиҫе сыпӑк урлӑ эпир виҫҫӗмӗр те тӑван», – терӗ пуриншӗн те калаҫма хатӗр Диана. Эппин, хастар ачасем йӑх-несӗл чысне ямаҫҫӗ-ха.

## Чӑвашлӑха упрасчӗ!



«Чӑвашлӑх ытларах ялта упранать», – тет Комсомольски районӗнчи Шурут шкулӗн вӗрентӳҫи Ирина Семеновна Каторгина. 1981 ҫултанпа ачасене тӑван чӗлхе илемне туйма тата упрама вӗрентекенскер ҫак шухӑша тӗпе хурса ӗҫлет. Тӗрлӗ ӑрӑва пӗлӳ парса аслӑ пурнӑҫ ҫулӗ ҫине кӑлараканскер кашнин кӑмӑл-туйӑмне аван ӑнланма пӗлет, ҫавӑнпах унӑн урокӗсенче нихӑҫан та тунсӑхласа лармӑн.

Кашни предмета ача хӑйӗн виҫипе хаклать. Тӗслӗхрен, расписанипе паллашнӑ май тепри ҫапларах шухӑш ҫаврӑмне кӗрсе ӳкӗ: «Математика: манран ан ыйттӑрччӗ ҫеҫ, доска умне тухсан хӑранипе вилсех кайӑп. Литература: паян интереслӗ хайлав сӳтсе явӑпӑр-ха, хам та ҫавнашкалрах лару-тӑрура пулса курнине каласа пама питех меллӗ. Акӑлчан чӗлхи: ют ҫӗр-шыва ҫитсе курас килет, эппин, тӑрӑшсах вӗренем-ха. Вырӑс чӗлхи – эпӗ вырӑсла ахалех лайӑх пӗлетӗп, учитель хӑй ман чухлӗ тӗшмӗртеймест. Географи: мӗн туса вӑхӑта ирттермелле-ши?..» Вӗренекен урока мӗнле кӑмӑлпа ҫӳрени учительтен, паллах, чылай килет. Ирина Семеновна вара хӑйӗн предметне чунтан парӑннӑ, нумай пӗлес текенсене мӗнпе кӑсӑклантармаллине тупатех. Ҫавна май ачасем тӑван чӗлхепе литература урокӗсене тӑрӑшса хатӗрленеҫҫӗ. Киле панӑ ӗҫсене те тӗплӗн пурнӑҫлаҫҫӗ. Час-часах сӑвӑ ҫырассипе ӗҫлеме тивнӗрен вӗренекенсем пушшех те хавхаланаҫҫӗ, тепӗр чухне пӗчӗкрех сӑвӑ, калав ҫырса пӑхаҫҫӗ. Вӗсем валли «Ҫамрӑк журналист» кружок пур. «Ҫак ӗҫе ытларах кӗҫӗн тата вӑтам классем хастар хутшӑнаҫҫӗ», – тет И.С. Каторгина. – Улттӑмӗшӗнчи Сильвина Лукина питӗ маттур. Вӑл чӑвашла та, вырӑсла та сӑвӑ ҫырма ӑста. Ҫавӑн пекех 5-мӗш класри Марина Красильникова, Ангелина тата Настя Пыркинасем, ҫиччӗмӗшӗнчи Алиса Голубева та питӗ пултаруллӑ. Урокра вӗсен чӑвашлӑх туйӑмӗ пысӑк пулни палӑрать». Ахальтен мар-ҫке «Чӑвашлӑх ан пӗттӗр тесен мӗн тумалла?» – тесе ыйтсан Сильвина Лукина татӑклӑн ҫеҫ: «Сӑвӑ ҫырмалла», – терӗ. Эппин, сӑвӑҫсене чӗлхемӗре хӳтӗлесе вӑй паракансем пек курать вӑл, хӑй те «хӗҫпӑшалланса» вӗсен ретне тӑрасшӑн. Ҫавӑн пек хастар та пултаруллӑ чӑваш тӗпренчӗкӗсене ӑс парса ӳстернишӗн вӗрентекенне мухтамалла!

*Рубрикӑна Лариса ПЕТРОВА (тел. 28-85-69) хатӗрленӗ.*

Тантӑш
чӑваш ачисемпе ҫамрӑкӗсен хаҫачӗ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чӑваш Республикин Информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министерстви; Чӑваш Республикин Информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министерствин «Тантӑш» хаҫат редакцийӗ» Чӑваш Республикин автономи учрежденийӗ.

● ХАҪАТ ИНДЕКСӖ:
54802 - (ҫур ҫула) - Чӑваш Республикинче,
11466 - республика тулашӗнче.

● АДРЕС
428019, Чӑваш Республики, Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13, VII хут.

● "Хыпар" Издательство ҫурчӗ" АУ техника центрӗнче калӑпланӑ."Чувашия" ИПК" ПУП типографийӗнче пичетленӗ.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРӖ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТӖП РЕДАКТОР
А.ЛЕОНТЬЕВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тӗп редактор: 56-00-67
редактор, ҫырусемпе тата юнкорсемпе ӗҫлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайӗ: 28-85-69
спорт тата экологи пайӗ: 56-11-80
право, кӑмӑл-сипет пайӗ: 28-83-89
факс: (8352) 56-15-30
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВҪИ
В.СТЕПАНОВ

● КАЛӐПЛАВҪӐ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1460 экз.
ҫав шутра Чӑваш Республикин тулашӗнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 4263
Пичете раштав уйӑхӗн 4-мӗшӗнче алӑ пуснӑ.

● ПИРӖН САЙТ:
www.tst.smi21.ru

Газета «Тантӑш» («Ровесник») зарегистрирована Федеральной службой по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ ?ФС77-53006 от 08.02.13 г.

Ⓟ паллӑпа реклама материалӗсене палӑртнӑ

Пичете графикпа 15 сехетре алӑ пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алӑ пуснӑ.

Тантăш 3
49 №, 2013, раштав, 5

# Пирĕн алăра пукане те чĕрĕлет



Ирхине шкула çитсе уроксем хыççăн киле каялла васканипе кăна пурнăça интереслĕ тума çуккине эпир аван ăнланатпăр. Çавăнпа та хамăрăн пурнăça май килнĕ таран пуянлатма тăрăшатпăр. Пирĕн шкулта пукане театрĕн кружокĕ ĕçлет. Елена Витальевна Артемьева ăна çав тери ăнăçлă ертсе пырать. Пуканисене вара хамăрах ăсталатпăр: чи малтан пластилинран пуç формине тăватпăр. Ун хыççăн папье-машеерен пукане пуçне хатĕрлетпĕр. Сăрлатпăр, куçне, çăварне, сăмсине ÿкеретпĕр. Кĕпесем çĕлесе тăхăнтаратпăр. Иртнĕ çул «Асамлă чечек» юмахпа куракансене савăнтарнăччĕ. Кăçал вара «Машăпа Упа» спектакль хатĕрлерĕмĕр. Эпĕ Маша рольне вылярăм. Аслисем те, кĕçĕннисем те спектакле тĕлĕнсе пăхрĕç. «Мĕнле майпа пуканесем калаçма та, выляма та пултараççĕха?» – тĕлĕнчĕç куракансем. Уйрăмах кĕçĕннисене питех те килĕшрĕ пулас – вĕсем пуканесене тыта-тыта пахаларĕç. Атте-анне те хаваспах пирĕн пултарулăхпа паллашма шкула килет. Вĕсем те нумай пулăшаççĕ. Хавхалантараççĕ, ырă сăмах каласа савăнтараççĕ. Ун пек чухне эпир тата тăрăшарах ĕçлетпĕр.

Кĕçех хамăр пултарулăхпа ялти клубра паллаштарасшăн. Хальхинче те куракансем хаваспах йышăнасса шанатпăр.

*Ирина АГАТЕЕВА, 4 класс.*
Сĕнтĕрвăрри районĕ,
Карапаш пуçламăш шкулĕ.

**Сăн ÿкерчĕкре:** Эпир – çамрăк артистсем; спектакльти сцена.



*.Эпĕ санăн тусу, ай, пулам-и?*
*Шкулти пукане театрĕн кружокĕсене çÿрекен ачасемпе туслашас килет. Пĕр-пĕринпе туслă пулар, хамăр ĕçĕмĕрсем çинчен каласа парсан тем пекех аван.*
*429566, Мариинско-Посадский район, д. Карабаши, начальная школа.*

# «Шкул шăпчăкĕ» конкурс çĕнтерÿçисем

Халăх юррине чĕртес, чăваш эстрада культурине çĕнĕлĕхсем кĕртес тĕллевпе иккĕмĕш çул ĕнтĕ хулара «Шкул шăпчăкĕ» конкурс йĕркелеççĕ. Конкурсăн кăçалхи пĕрремĕш тапхăрне тăхăр вун виçĕ ача хутшăнчĕ. Пысăк йышра пĕчĕк «çăлтăрсене» тупса палăртма тÿревсене пĕрре те çăмăл пулмарĕ. Çамрăк артистсем хăйсене сцена çинче епле тытнине, вĕсен тумĕсене, ăсталăхне хаклама тивнĕ. «Чи маттуррисене иккĕмĕш тапхăрти конкурсра кăтартма сĕнтĕмĕр», – терĕ чăваш эстрада юрăçи С.М.Яковлева жюри членĕ.

«Шкул шăпчăкĕ» конкурса чăваш композиторне Федор Павлович Павлова халалласа ирттерме палăртнă. Ачасен ăсталăхне «Эстрада юрри», «Халăх юрри», «Аккапелла» номинацисемпе хакларĕç.

Пĕчĕк «çăлтăрсенчен» гран прие Даниил Зайцев (10-мĕш шкул), Дима Коньков (33-мĕш шкул), София Ермолаева ( 49-мĕш шкул), Лидия Одинцова (57-мĕш шкул), Ангелина Васильева (56-мĕш шкул), Никита Родионов (47-мĕш шкул), Настя Андреева (1-мĕш гимнази), Ксения Тестова (61-мĕш шкул) çĕнсе илчĕç.

«Шкул шăпчăкĕ-2013» ята вара 39-мĕш вăтам шкулта вĕренекен Алеша Смелов тивĕçрĕ.

*Ирина ВЛАСОВА,*
*Антонина ПЕТРОВА,*
*чăваш чĕлхи учителĕсем.*
Шупашкар, 47-мĕш шкул.

## ПĔР ШКУЛТАН ХЫПАРЛАÇÇĔ

# Вулавăшăн кĕтнĕ хăнисем

Пирĕн шкул чылай çул ĕнтĕ хулари А.С.Пушкин ячĕллĕ библиотекăпа çыхăну тытать. Темиçе çул туслăх хĕлхемĕ ялкăшать. Эпир литература вулавĕсем, тĕл пулусем, конкурссем, презентацисемпе куравсем ирттеретпĕр. Ушкăнпа вулав тĕнчинче тĕрлĕ калавпа юмахри сăнарсемпе курнăçатпăр.

Нумаях пулмасть тăххăрмĕш «а» класра «Чăваш кĕнеке издательствин çĕнĕ ĕçĕсем» экскурси-курав иртрĕ. Çĕнĕ кĕнекесемпе паллашма питех те интереслĕ пулчĕ. Çакăншăн вулавăш ĕçченĕсене пысăк тав.

Тăххăрмĕшсем час-часах практика конференцийĕсене хутшăнаççĕ, проект ĕçĕсем ирттереççĕ. Тин çеç типографире пичетленсе тухнă кĕнекесемпе паллашма питех те хавас пулнине кашнинчех кăмăлтан каласа параççĕ çамрăк вулакансем.

*Людмила АГАФОНОВА,*
*чăваш чĕлхи вĕрентекенĕ.*

# «Ырă кăмăллăх эрни» акцире çеç мар

Шкулта çакăн пек ятпа акци иртессине пĕлсен вĕренекенсем питех тĕлĕнмерĕç те. Мĕншĕн тетĕр-и? Пирĕн шкулти кашни вĕренекен ырă кăмăллă, сăпайлă тесен те йăнăш пулас çук. Килте кăна мар, шкулта та, урамра та, транспортра та вĕсем хăйсене йĕркеллĕ тытни пире кашнине савăнтарать.

Ачасем эрнене хутшăннă май «Ырă сăмах», «Ырă ĕç», «Ырă чĕре» ятлă сочиненисемпе калавсем çырчĕç. Çавăн пекех вĕренекенсем «Мĕн вăл ырă кăмăллăх?», «Ырă çулпала» конкурссемпе викторинăсене хастар хутшăнчĕç. Çак эрнере вара кĕçĕн классенче вĕренекенсем вĕсен кайăксем валли чылай сырăш турĕç, йывăççем çине çакрĕç. Хĕл кунĕсенче ачасем хатĕрленĕ «столовăйсенче» çунатлă туссем апатланса савăнĕç.

Чăннипех те интереслĕ, усăллă иртрĕ эрне. Ячĕшĕн йĕркеленĕскер пулмарĕ вăл. Кашни вĕренекен хăйне валли нумай çĕнни тупрĕ кунта.

*Лариса ЛЕОНТЬЕВА,*
*чăваш чĕлхи вĕрентекенĕ.*

# Мĕн-ши вăл Тăван çĕр-шыв?

Кашни çыннăн пысăк çĕр-шывра хăйĕн пĕчĕк кĕтесĕ пур. Ку вăл – çуралнă ялĕ, выляса чупнă урамĕ, ашшĕ-амăшĕн ăшă çуртĕ... Çакă ĕнтĕ унăн пĕчĕк Тăван çĕр-шывĕ. Тăпăл-тăпăл кĕтесрен тытăнса тăрать те ĕнтĕ пирĕншĕн нимĕнрен те хаклă Тăван çĕр-шыв. Вăл пире хĕвел пек ăшăтать, атте-анне пек упрать. Ăна юрататпăр, хисеплетпĕр, унпа пĕр пурнăçпа пурăнатпăр.

Эпир те çак кунсенче пиллĕкмĕш-улттăмĕш классенче вĕренекенсемпе «Мĕнши вăл Тăван çĕр-шыв?» темăпа калаçу ирттертĕмĕр. Кашни вĕренекен хăйĕн шухăшне пĕлтерме тăрăшрĕ.

**Руслан ТИМОФЕЕВ (6-мĕш класс):**
– Тăван çĕр-шыв пуриншĕн те хаклă. Вăл хамăр çуралса ÿснĕ кил-çуртран, пÿрт умĕнче çитĕнекен ем-ешĕл хурăнпа йăмраран пуçланать.

**Настя СИГОВА (6-мĕш класс):**
– Ман шухăшпа вăл юратнă аттепе анне, ырă кăмăллă асаттепе асанне тата кукамайпа кукаçи. Вĕсем яланах пĕрле, мана ăнланаççĕ, пулăшаççĕ.

**Анна АБРАШИНА (5-мĕш класс):**
– Маншăн Тăван çĕр-шыв – аттепе анне калаçакан чăваш чĕлхи. Вăл чи çепĕççи, илемли. Халăхăмăра çутта кăларакан Иван Яковлевич Яковлев та, тĕнче уçлăхне парăнтаракан Андриян Григорьевич Николаев космонавт та чăвашла калаçса ÿснĕ.

**Ваня ЧИНДАРЕВ (5-мĕш класс):**
– Сарă тулăллă вĕçсĕр-хĕрсĕр хирсем, кашласа ларакан вăрмансем, тăрна куçĕ пек тăрă çăл куççемпе юхан шывсем, çĕр айĕнчен уçласа кăларакан нефть тата газ вышкисем, эпир вылякан теттесем, ырă шăршăллă чечексем, вăрманти уçă сывлăш, чĕвĕл-чĕвĕл вĕçен кайăк юрри – акă, ман шутпа Тăван çĕр-шыв.

**Юля ЛАПИНА (6-мĕш класс):**
– Юратнă шкул, чăваш тĕрри, чăваш ташши-юрри – пурте Тăван çĕр-шыв.

*Ирина ОРЛОВА,*
*чăваш чĕлхи вĕрентекенĕ.*
Шупашкар, 24-мĕш шкул.

# Кăмăллакан вырăн

Пирĕн ял калама çук илемлĕ вырăнта ларать. Сарăлса выртакан уй-хир аякранах хитрен курăнать. Чи илемли вара – кÿлĕ. Вăл çулла та çап-çуттăн йăлтăртатать. Унта шыва кĕретпĕр, пулă тытатпăр. Хур-кăвакал ишсе савăнать. Хĕлле вара кунта ачапăча сасси ялан илтĕнет. Конькипе ярăнма, хоккейла выляма кашни хавас. Кĕçех хĕллехи каникул çитĕ. Эпир вара унта савăнăпăр!

*Денис ФЕДОРОВ.*

# Манăн савăнăç

Женя шăллăм кĕçех икĕ çул тултарать. Унăн куçĕсем çутă кăвак, çÿçĕ сарă. Шăллăмпа питех те савăнатăп. Ирхине вырăн çинчен тăрать те ман пата пырса выртать. Ачашланать, хăйĕн чĕлхипе темĕн те калать. Эпĕ ăна питĕ юрататăп. Апатланма ларсан та алăран çавăтать те таçта илсе каять е выляма йыхăрать. Чылай чухне вара пурте пĕрле тĕрлĕ вăйă вылятпăр.

Женя мана шкула ырă сунса ăсатать, кăмăлпа кĕтсе илет.

Чăннипех те савăнăç пирĕн Женя!

*Юля ШЕРБУСТАНОВА.*
Комсомольски районĕ,
Нĕркеç вăтам шкулĕ.

# Чăваш тумĕн уявĕ

Шкулта «Ахах-мерчен авалăхĕ» ятпа чăваш тумĕн уявĕ иртрĕ. Çак уçă урока Чăваш халăх ăсти З.И.Воронова, СССР халăх артистки В.К.Кузьмина тата шкулти чăваш чĕлхи вĕрентекенĕсем йĕркелерĕç. Сцена çине анат енчи тата вирьял чăвашĕсен тумĕсене тăхăнса тухнă хĕр ачасене куракансем хаваслăн кĕтсе илчĕç. З.И.Воронова кашни тум пирки тĕплĕн ăнлантарчĕ. Çавăн пекех шкул ачисем Пушкăрт, Самар, Саратов тăрăхĕсенчи, Тутар Республикинчи чăваш хĕрарăмĕсен кĕписемпе паллаштарчĕç. Хальхи хăш-пĕр фольклор ушкăнĕсен костюмĕсене, уйрăм юрăçсен тумĕсене курма питех те интереслĕ пулчĕ. Ар çынсем тăхăннă шупăра та курма кăмăллă.

Уява пухăннисене вара СССР халăх артистки Вера Кузьминична Кузьмина Петĕр Хусанкайăн «Тилли юррисем» поэма сыпăкĕсене вуласа тĕлĕнтерчĕ. Паллă артистка çамрăксене лайăх вĕренме, аслисене хисеплеме, малашнехи пурнăçра ырлăх-сывлăх сунчĕ.

Чăваш тумĕн уявĕ пуриншĕн те интереслĕ, усăллă иртрĕ.

*Л.НИКИФОРОВА,*
*Г.КЕРУКОВА,*
*чăваш чĕлхи вĕрентекенĕсем.*
Шупашкар,
49-мĕш шкул.

# Чун ăшшипе кĕтретленнĕ уяв



«Анне – эс чи хакли тĕнчере...» – юрă Шупашкарти 10-мĕш шкулти уяв залне пустаръăннисен чунĕсене çупăрласа асамлăх тĕнчине илсе кайрĕ. Хăшсен куççуль те юхса анчĕ.

Анне кунне паллă тума 4 «и» класс ачисем амăшĕсене шкула йыхравларĕç. Тĕпренчĕкĕсем тăрăшса та хавхаланса çут тĕнчери чи хаклă çыннисене ташă-юрăпа савăнтарчĕç, пĕчĕк спектакль кăтартрĕç. Мĕнле хĕпĕртерĕç амăшĕсем ачисем çапла пултаруллă пулнăран! 4 «и» класра вĕренекенсем те уявпа кăмăллă юлчĕç. Анне кунĕн çути пурин чунĕсене те ăшăтрĕ.

*Анастасия РОДИОНОВА.*
Шупашкар, 10-мĕш шкул.

# Тĕл пулу

# «Тантăш» – Муркаш районĕнче

**Муркаш районĕнчи Нискасси шкулĕнче «Тантăш» хаçатăн тус-юлташ сахал мар. Вĕсем питĕ хаваслă, тарават та маттур. Шкулта «5» паллăпа çеç вĕренекен те чылай. Маттурисем шкул чысне тĕрлĕ предмет олимпиадисенче хÿтĕлеççĕ, малти вырăнсене тухма тăрăшаççĕ. Ачасем вĕренÿре кăна мар, пур çĕрте те ĕлкĕреççĕ. Уйрăмах спорта ытларах юратни палăрать. Ара, шкул директорĕ те Алексей Николаевич Дмитриев физкультура учителĕ пулнă май, шкул ачисене сывă пурнăç йĕркине явăçтарма тăрăшать.**

## Совет Союзĕн Паттăрĕ ячĕпе – чупу




Шăпах эпĕ Нискассине пынă кун шкулта Совет Союзĕн Паттăрĕ Борис Михайлович Васильев çуралнăранпа 100 çул çитнине халалланă мероприяти иртрĕ. Район администрацийĕнчен килнĕ хăнасем çамрăк ăрăва паттăрсене, çĕр-шыва хÿтĕленĕ асатте-асаннесен ячĕсене асрах тытмаллине, вĕсенчен тĕслĕх илмеллине чĕнсе каларĕç.

Борис Васильев ачаранпах летчик пулма ĕмĕтленнĕ. Унăн ĕмĕчĕ пурнăçланнă – вăл вĕçев шкулне вĕренме кĕнĕ, унтан Хусанти авиаци институтне çул тытнă. Вăл вăрçăра тăшман техникине чылай тĕп тунă, хăй тĕллĕн 10, юлташĕсемпе пĕрле 12 самолета персе ÿкернĕ. Борис Михайлович полк командирĕ пулнă. 1941 çулта çирĕм çиччĕри Борис Васильева Ленин орденĕпе наградаланă, Совет Союзĕн Паттăрĕн ятне панă.

Мероприяти усăлнă хыççăн шкул ачисем ялавсемпе Çĕмĕртлĕх Чемей ялне çити чупрĕç, Борис Михайлович Васильев ячĕпе хăпартнă стела патне чечексем хучĕç. Ачасем те, аслисем те Паттăра манманни, унпа мухтанни савăнтарать.

## Спорта чунтан парăннă

Сăмахăм 5-мĕш класра вĕренекенсем пирки. Шăпăрлансем ăмартмалла «5» тата «4» паллăсем илнисĕр пуçне пурте тенĕ пекех çăмăл атлетика секцине çÿреççĕ. Настя Попугаева, Олег Петров, Дима Машинин, Коля Алексеев, Настя Смирнова, Алексей Кукушкин, Андрей Шадрин... пурне асăнса та пĕтереймĕн. Пулас каччăсем вара харăсах икĕ çĕре çул такăрлатаççĕ: физкультура учителĕсем йĕркеленĕ бокс секцине васкаççĕ, ятарлă техникăна парăнтараççĕ. Хĕллехи спорт тĕсĕсене кăмăллакан та пайтах пиллĕкмĕшĕнче. Сăмахран, Настя Попугаевăнах илер. Вашаватскер вĕренÿре те, спортра та малта. Хĕр ача ашшĕ-амăшне, тăванĕсене, тус-тантăшне çуран тата йĕлтĕрпе чупас тĕлĕшпе уйрăмах лайăх кăтартусемпе савăнтарать. Вăл яланах район, республика шайĕнче иртекен ăмăртусене хутшăнать, малти вырăнсене йышăнать.

Ачасем малалла та сывă пурнăç йĕркине тытса пырасса шанас килет.



## Теттесем лавккаринчен те илемлĕ



Нискасси шкулĕн ачисем маттур та вашават пулнине тепĕр тĕслĕхпе те çирĕплетес килет. Пуçламăш классенче вĕренекенсем пурте – ал ăстисен «Хĕвел савраншĕ» кружока çÿреççĕ. Мĕн тĕрлĕ илемлĕ япала шутласа кăлармаççĕши шăпăрлансем! Çак ĕçре вĕсене Маргарита Пушкарева педагог та чылай пулăшать. 1-2-мĕш класра чустаран чĕр чунсем, ÿкерчĕксем хатĕр-леççĕ пулсан 3-4-мĕш классенче ăс пухакансем çемçе теттесем ăсталаççĕ. Чылайăшне çак ĕçре ашшĕ-амăшĕ те пулăшать, хăшĕ-пĕри хăй тĕллĕнех ĕçлет: кÿлепине касса кăларать, çĕлет... Маргарита Николаевна каланă тăрăх, халĕччен вĕсем акăшсене, лашасене тата ытти чĕр чуна ăсталанă. Ытларах хĕвел тухăç гороскопĕпе çыхăннине калăплаççĕ ачасем. Хăйсен ĕçĕсене вара район, республика шайĕнче иртекен тĕрлĕ конкурса тăратаççĕ, ачасем малти вырăнсене пĕрре мар йышăннă.



Тетте еплерех хатĕрлемеллине ăçтан шыраса тупаççĕха ачасем? Вĕсем хăйсен учителĕпе ятарлă литература туянаççĕ, кĕнекесенчен ку е вăл япалана ăсталас ĕçе хăнăхаççĕ. Акă, салфеткăран открытка, çăмран чечексем еплерех ăсталамаллине ăса хывнă маттурсем.

Пушă вăхăт тупăнсан кружока вăтам классенче ăс пухакансем те килеççĕ. Аслăраххисем костюмсем хăй тĕллĕн çĕлеççĕ, вĕсене технологи предмечĕпе иртекен олимпиадăна та илсе каяççĕ. Тĕслĕхрен, Çĕнĕ Çул уявĕн чи хаклă хăнисен – Хĕл Мучипе Юрпикен – тумĕсене хатĕрленĕ.

Кивĕ тум-тир, теттесене те çĕнетме пултараççĕ ал ăстисем. Ĕçсем вара тĕрлĕ выставка-конкурсра çынсене илем кÿреççĕ. Ачасем ăсталанă «пуянлăхсене» регионсем хушшинче иртекен конкурсене те тăратаççĕ.

## Кăмăл пулсан сочинени те, сăвă та çырăнать...



Чăваш, вырăс чĕлхи вĕрентекенĕ сем килти ĕç мĕн парса яраççĕ? Кĕнеке вулама, тĕрлĕ хăнăхтару пурнăçлама... тата сочинени çырма. Ытларахăшĕ çак ĕçе хăйне питех юратмасть çав. 7-мĕш класра ăс пухакан Кирилл Зареев та: «Ытларах чухне кăмăлтан килет», – терĕ. Анчах та вăл сочинени, сăвă шăрçалас ĕçе хăйне евĕрлĕ юратни курăнчĕ. Ачаранпах кĕнеке шĕкĕлчеме кăмăллаканскер пуçламăш классенче пуçа килекен шухăшсене шурă хут çине куçарнă. Арçын ача тăван ял, çемье, çут çанталăк, ял-йыш çинчен сăвă çырнă. Унăн ĕçĕсем «Тантăш» хаçатра та кун çути курнă.

– Эпĕ тавралăха сăнама юрататăп, ăна сиен кÿрес мар тесе тăрăшатăп. Çавна май манăн пухмачра ытларах çут çанталăк темипе çыхăннă сăвăсем, – пĕлтерчĕ çамрăк поэт.

Кирилл уроксем хыççăн Сергей Николаевич Васильев физкультура учителĕ ертсе пыракан волейбол секцине çÿрет. Унччен маларах баскетбол вăйă техникине те парăнтарнă. Унсăр пуçне çăмăл атлетикăра та çитĕнÿсем тăвать. Çавна май уншăн спорт теми те çывăх. Шăм-шака çирĕплетес, ирхине зарядка тăвас... Пушă вăхăтра ахаль лармасть арçын ача. Вăл библиотекăна çул тытать, кунта илемлĕ литературăна алла тытать.

– Ытларах вырăс çыравçисен произведенийĕсене шĕкĕлчетĕп, анчах тăван чĕлхепе çырнисене те вулама манмастăп. Юратнисем – «Ылтăн вăчăра», «Юманлăхра çапла пулнă». Уйрăмах вăрçă, пирĕн салтаксем тăшмансене хирĕç паттăрăн çапăçни çинчен вулама кăмăллатăп, – чунне уçрĕ 7-мĕш класс вĕренекенĕ.

«Кĕнеке – пĕлÿ çăл куçĕ», – теççĕ. Кирилл шухăшĕпе нумай вуланин, сăвă, сочинени çырас çĕрте чылай пулăшать. Çак ĕçре çеç мар, кулленхи пурнăçра та. Çавна май çамрăк ăрăвăн алла кĕнеке тытма вăхăт тупмаллах. Шел те, çак ырă пулăма юлашки вăхăтра сахал куратпăр.

Чăн та, сăвă е сочинени çырма хăйне евĕрлĕ пултарулăх, анлă тавра курăмлă пулмалла.

– Сăвă çырасси – чун киленĕçĕ. Анчах юлашки вăхăтра сайра хутра çыркалатăп, ытларах спорта вăхăт уйăратăп. Сенкер экранпа интереслĕ телепередачăсем куратăп, çĕнĕ технологисемпе кăсăкланатăп, – сăмахне вĕçлерĕ Кирилл Зареев.

## Туслă çемьери пек



11-мĕш класра пурĕ 8 ача ăс пухать: 5 хĕр ача тата 3 арçын ача. Пĕри йывăрлăха лексен пĕр-пĕрне алă пама тăрăшаççĕ, туслă çемьери пек ăнланса, хисеплесе пурăнаççĕ.

Аслă класра вĕренекенсем пултаруллă, вĕренÿре «5» тата «4» паллăсемпе çеç ĕлкĕрсе пыраççĕ. Шкулта иртекен мĕн пур мероприятие хаваспах хутшăнма тăрăшаççĕ вĕсем. Катя Мочаловăпа Ирина Кольцова ачаранпах музыка учителĕ ертсе пыракан юрă-ташă кружокне çул такăрлатаççĕ: чăваш, вырăс халăх юррисене шăрантараççĕ. Пикесем фольклор ушкăнĕпе Муркаша та çÿреççĕ, хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ. Вика Ивановăпа Юля Цветкова – вĕренÿ отличникĕсем. Иккĕшĕ те пулас профессие медицинăпа çыхăнтарасшăн, çавăнпа та биологи, химиқ, экологи предмечĕсене тарăннăн тишкереççĕ. Хĕрсем тĕрлĕ предмет олимпиадисене кайса шкул чысне çĕклеççĕ. Каччăсем вара машинăпа, çĕнĕ компьютер технологийĕсемпе кăсăкланаççĕ. Çар çынни, строитель пулма ĕмĕтленекенсем спортпа туслă. Футбол, волейбол выляса кĕлеткене çирĕплетеççĕ.

Часах шкул ачисемшĕн яваплă тапхăр – ППЭ çитĕ. Вун пĕрмĕшсем учитель каланине тимлĕн итлеççĕ, унăн кашни сăмахне ăса хываççĕ, ăс-тăна пуянлатас тесе тĕрлĕ кĕнеке тишкереççĕ. Экзаменсене ăнăçлă парсан студент пулатăнах!

*Ирина КОШКИНА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

ПРЕМЬЕРА



# «Раççей пирки шухăшлатпăр-ха, аннесем пирки пуçра та çук!..»

**_Чӳк уйăхĕн 29-мĕшĕнче К.В. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче Арсений Тарасов пьеси тăрăх лартнă «Мунча кунĕ» спектакль премьери пулчĕ. Режиссерĕ тата илемлĕх ертӳçи – СССР халăх артисчĕ, РФ тата ЧР Патшалăх премийĕсен лауреачĕ Валерий Яковлев. Режиссерĕ – Наталия Сергеева. Композиторĕ – ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, РФ тата ЧР Патшалăх премийĕсен лауреачĕ Николай Казаков._**

Ятĕнченех шухăшласа илетĕн: эппин, мунча хутнă кун пысăк пĕлтерĕшлĕ темĕнле ĕç пулса иртет. Чăнах та, çак кун Кĕтерукăн (РСФСР, ЧАССР халăх артистки Нина Яковлева) ывăлĕсем иккĕшĕ те тăван килне пуçтарăннă. Пĕри, Георгий (Чăваш халăх артисчĕ Вячеслав Александров), мунча хутать. Виталие (Сергей Павлов) ăс-тăн пăтраннипе аптăракан амăшĕ паллаймасть: «Ăçтан килсе çакланчĕ ку этем пирĕн тĕле?» – тесе Георгий çине çăлăнăç шыранăн пăхать. Вăл хăйĕн ывăлĕ пулнине пĕлсен: «Манăн тепĕр ывăл та пурччĕ-и?» – тесе тĕлĕнет. Ултă çул тăван килте пулман, çар ĕçне парăннă Виталий тинех тăна кĕрет тейĕн. «Раççей пирки шухăшлатпăр-ха, аннесем пирки пуçра та çук», – тет вăл. Шăпах амăшĕ пирки канăç тупаймаççĕ те вĕсем, мунча хутнă кун. Георгий арăмĕ – интеллигенци таврашĕ, яла пырса та курăнасшăн мар. Виталий вара – Раççей çарĕн офицерĕ, тăван яле кусса килсен карьерипе сыв пуллашма пултарать-çке. Тепĕр тесен, вăл час-час килсе те çӳреймест, аякра пурăнать. Çак хĕрӳ тавлашу мунчара пулса иртет. Мисаил (Евгений Урдюков) ӳкĕте кĕртнипе Кĕтерук кинеми çак калаçăва илтет. Ывăлĕсене хăйсен пурнăçне йĕркелеме чăрмантаратăп тесе хурланса ӳкет. «Эпĕ хамăнне Турри касса панă чĕлле çисе янă ĕнтĕ, тĕпренчĕкĕсене пуçтарасси кăна юлнă», – тет Кĕтерук. Хăйне сарă çулçăпа та танлаштарать вăл: кивви татăлса ӳкет те çĕннине çул парать. Çавăнпа ачисене хăйĕн пирки кулянтарас мар тесе килтен тухса кайма тăв тăвать.

Спектакле чĕрĕлĕх кĕртекен, хурланакан чуна йăпатса вар хытиччен култаракан сăнар – Мисаил, кӳршĕ ачи. Чĕлхесĕрскер, мĕн калас тенине пĕтĕмпех пит-куçа хускатса – алăсемпе хăлаçланса тата пыр тĕпĕнчен тухакан сассипе кăшкăрса ăнлантарать. Питĕ правур хăй. Çара лекнĕ пулсан ыттисемшĕн тĕслĕх пулмаллаччĕ. «Бизнес вăл бизнес, унта хĕрхенсе тăмаççĕ», – тет Георгий вăл Виталий енчĕкне йăтса тарсан. Мисаил айванкка пулсан та çак йĕркене чухлать. «Вăт, ухмах тесе кала ăна çакăн хыççăн», – тĕлĕнет укçасăр юлнă çар çынни. Ăс-тăн енчен катăкрах пулсан та чĕлхесĕрскерĕн чунĕ пысăк. Енчĕкри пысăк хут укçасене те пĕр шелсĕр кăларса пăрахать вăл, уншăн чи хакли те – шăнкăр-шăнкăр вак укçа, мĕншĕн тесен унра кĕвĕлĕх пур. Чуна пырса тивмелле шăхлич калаканскерĕн кĕвĕ туйăмĕ пысăк. Ахальтен мар Кĕтерук ăна пысăк та ятлă çын, Георгипе Виталирен те ăслăрах пулма пултарĕччĕ тет. Шăпа çапла кулман пулсан-и?.. «Юрать, Мисаил пурха пирĕн. Вăл пулмасан укçине кулипе парсан та тытăнса тăраяс çук», – тет Кĕтерук. Чăнах та çапла, ывăлсем килеççĕ те каяççĕ. Мисаил вара кирек хăш самантра та пулăшма хатĕр. Йăваш чĕреллĕскер, кинеми хурланнине курсан кĕвĕ каласа ташлаттарма хăтланать, кăмăлне çĕклет. Е тата пытанмалла выляттарать.

«Кĕвĕçекене кĕве çиет», – теççĕ халăхра. Çак сăмахсен тĕрĕслĕхне Леша (Александр Петров), çамрăк учитель, питĕ витĕмлĕ кăтартса парать. Арăмĕ, Мариша (Оксана Драгунова), Виталий патне тарасран çав тери хăрать вăл. Кĕвĕçме сăлтавĕ те пур. Каччăн амăшĕ, Тарье аппа (Наталия Сергеева) кинне ача çуратайманшăн пĕрмай хурлать, çамрăксене уйăрттарасшăн. Юлашкинчен Маришăн та чăтăмлăх пĕтет. «Пур пĕрех çурататăп, Виталирен!» – тет вăл. Çак сăмахсем чăна килесрен хăраса ӳкнĕ упăшки канăçне йăлтах çухатать, çар çыннине çапса ӳкерес тесе аллине вут пуленки те, кашта та тытать. «Манăн Леша лайăх, вăрçма кăна пĕлмест. Эсĕ ăна ан тĕкĕн», – асăрхаттарать Мариша Виталие.

Драмăра Соня (Елизавета Хрисанова) сăнарĕ те пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнать. Телейсĕр юратăвне пула ĕçке ернĕ вăл. Кĕтерук ăна питĕ хĕрхенет. «Георгипе пĕрлешнĕ пулсанччĕ...» – тесе хаш та хаш сывлать. Георгий хăй те çакна ăнланать. Унăн пуçĕнче вăрттăн шухăш тĕвĕленме пуçланă. Хĕрĕ шкул пĕтерсен арăмĕпе уйрăлса Соньăна качча илесшĕн вăл. Çакăн пирки Виталие мунчара пĕлтерет.

Шурлăх урлă каçнă чухне тĕмеске тесе тĕрĕс мар çĕре пусатăн та путса ансах каятăн. Çавăн пекех пурнăçра та йăнăш утăм тусан инкек серепине çакланатăн, унтан тухасси вара иккĕленӳллĕ. Спектакль хурлăхлă вĕçленет. Кĕтерук килтен тухса каять. Михаил çунакан мунчаран Соньăна çĕклесе тухать, анчах пурнăçне çăлса хăвараймасть. Виçĕмкн асаппа тулнă чĕрине пусараймасăр хытăн: «Ан-не!» – тесе кăшкăрса ярать.

Çак икĕ пайлă драмăра Арсений Тарасов этемлĕхе куллен пăшăрхантаракан çивĕч проблемăсене хускатнă: ачисене ӳстерсе çитĕнтернĕ амăшĕ пĕччен юлни, çемьере ача пулманни, усал хуняма, кĕвĕçӳ, телейсĕр юрату, ĕçкĕ. Ку ыйтусем пирĕн пурнăçра анлă сарăлнă, вĕсем яланах пулнă, пулаççĕ те. Чи кирли, куракан спектакльпе паллашсан хăйĕн йăнăшĕсене асăрхаса тӳрлетме тăрăштăр е вĕсенчен сыхлантăр. «Мунча кунĕ» хыççăн чылайăшĕ хăйĕн пурнăçне айккинчен хакласа кирлĕ пĕтĕмлетӳ тума пултарчĕ пулĕ тетĕп.

*Лариса ПЕТРОВА.*

СТИПЕНДИАТ

# Маттур ачасене хавхалану кирлех!

ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Николай Малов Хĕрлĕ Чутай районĕн хастар та пултаруллă шкул ачисене çулсеренех стипенди парса хавхалантарать. Кăçал çак хисене Çĕн Атикасси шкулĕнче 10-мĕш класра ăс пухакан Сергей Егоров та тивĕçрĕ.

Тăрăшуллă ачана таçта та асăрхаççĕ. Сергей район шайĕнчи предмет олимпиадисенче тăтăшах малти вырăна тухать. Пĕлтĕр технологипе çĕнтерсе республикări ăмăртăва та хутшăнса курчĕ. Мухтанма юратмасть вăл, ытларах тăрăшасчĕ тесе ĕмĕтленет. Унăн тĕслĕх кăтартакан та пур-çке – иккĕмĕш сыпăкри пиччĕшĕ Женя Долгов. Вăл шкулта вĕреннĕ чухне предмет олимпиадисенче тăтăшах çĕнтернĕ. Республика конкурсĕсенче те пĕрре мар палăрнă. Хатĕрленмесĕр çитĕнӳ пулас çук. Пиччĕшне сăнанă май Сергей çакна питĕ аван ăнланать, çавăнпа хăй те унран юласшăн мар. Тăрăшнин усси пурах.

– Стипендие тивĕçнине пĕлсен питĕ савăнтăм. Пысăк та ырă кĕтменлĕх пулчĕ вăл маншăн, – хаваслăн пĕлтерет маттур каччă. – Вĕрентекенсене пурне те тав тăвас килет. Вĕсенчен кашниех пире ыррине вĕрентет, çутă пуласлăх патне çитме çул уçса парать.



Шкул ачисем кĕнеке вуласшăн çунманни хастар вĕренекене питĕ пăшăрхантарать. Хăй вăл ялан нумай пĕлме ăнтăлать те кĕнекесĕр пурăнма пултараймасть. Ытларах ăслăлăхпа çыхăннисене кăмăллать. Историпе те шутсăр кăсăкланать. Сергей – «Тантăш» хаçат тусĕсенчен пĕри, кашни кăларăма юратса вулать.

Сисĕммесĕрех шкул вăхăчĕ те иртсе каять акă. Вуннăмĕш класс каччи малашлăх пирки шутлама тытăннă та, инженер пулас ĕмĕтпе çунатланать. Çак ĕç хальхи вăхăтра чи кирлисенчен пĕри тесе шутлать вăл. Эппин, шкултан лайăх паллăсемпе вĕренсе тухса ĕмĕте пурнăça кĕртмелле çеç.

Стипенди укçине мĕнлерех тăкакламаллине хальлĕхе палăртман-ха Сергей, вăл кирлĕ çĕре каясси пирки пĕрре те иккĕленмест.

*Лариса ПЕТРОВА.*

Çырăнтару – 2014

# Суйлăр, çырăнăр, вулăр!

**«Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене Раççей почтин мĕн пур уйрăмĕнче, çавăн пекех «Чăваш пичет», «Советская Чувашия» киоскĕсенче тата редакцире альтернативлă майпа 2014 çулăн I çурринче илсе тăмашкăн çырăнтараççĕ**

| КĂЛАРĂМСЕМ | ИН-ДЕКС | ÇЫРĂНТАРУ ХАКĔСЕМ | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | | Почта уйрăмĕсенче | «Чăваш пичет» киоскĕ сенче | «Советская Чувашия» киоскĕ сенче | Редакцире |
| Хыпар | 54800 | 460-86 | 279 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăмат кун | 78353 | 213-30 | 141 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | 54804 | 267-30 | 231 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | 11515 | 239-22 | 213 | 213 | 141 |
| Сывлăх | 11524 | 129-06 | 111 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | 54806 | 121-14 | 111 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | 54838 | 218-34 | 162 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси–кил | 43887 | 99-72 | 84 | 84 | 61-20 |
| Тăван Атăл | 11529 | 251-76 | 216 | 216 | 168 |
| Капкăн | 24608 | 122-10 | 105 | 105 | 87 |
| ЛИК (Литература. Искусство. Культура) | 83429 | 127-92 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | 54807 | 217-14 | 186 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства Чувашской Республики | 54847 | 695-88 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | 54802 | 192-18 | 132 | 132 | 90 |
| Самант | 73208 | 155-64 | 156 | 156 | 120 |
| Тетте | 73771 | 119-58 | 111 | 111 | 90 |

**Аса илтеретпĕр: хаксем – 2013 çулăн I çурринчи шайра.**

# «Тетте» вулăр, çырăнăр

**Анне çырăнчĕ «Тетте»,**
**Ăна вулать пур çемье.**
**«Теттепе» хаваслăрах,**
**Пурăнма та савăкрах.**




## Кушак

Пирĕн килте кушак пур.
Хăй вара вăл пит маттур.
Унăн тусĕ шăши пур,
Вăл та самаях сатур.
Тĕл пулсан кашни кунах
Вăй выляççĕ аванах:
Футболла та шашкăлла,
Тытмалла, пытанмалла.



*Даша ПАВЛОВА.*

## Кĕркунне

Акă килчĕ кĕркунне,
Килчĕ пылпа, çăкăрпа.
Çаратать йывăççене,
Хăй вылясшăн çулçăпа.
Çитрĕ хура кĕркунне.
Ăсанаççĕ кайăксем
Кăнтăра, хĕвел енне.
Килĕç тепĕр çуркунне.

*Ксения ЧЕРВЯКОВА.*
Çĕрпӳ районĕ,
Тавăшкасси.

## Камăн пур?

Камăн кун пек кушак пур?

## *Пирĕн пултарулăх*

Мяуклатать, ай, тур-тур!
Ир-ирех питне çăвать,
Тепĕр хут паппа тăвать.

*Анна КАЛАШНИКОВА.*
Комсомольски районĕ,
Хырай Ĕнел шкулĕ.

## Автан

– Ăсталла васкан, автан?
– Картишне кĕресчĕ ман.
– Унта санăн мĕскер пур?
– Унта манăн чĕпсем пур.
– Чĕппӳсем мĕскер тăваççĕ?
– Сарă кĕрпе пит ыйтаççĕ.
Кĕрпе илме пӳртелле
Халь автанăн кĕмелле.
Мĕн вара ку? Тамаша!
Пӳртре çывăрать лаша,
Сурăх кĕнеке вулать,
Кăвакал нуски çыхать,
Качака кĕпе çăвать.



*Виолетта АНДРЕЕВА.*
Вăрмар районĕ,
Кĕтеснер шкулĕ.

**Александр ПЛЕХАНОВ ӳкерчĕкĕсем.**

## ВИÇĔ ЧĔЛХЕ – ВИÇĔ ĂС

**Саламлă сăмахсем**
**Поздравления**
**Congratulations**
**[конгрэтьюлэйшнз]**




**Сире уяв ячĕпе саламлатăп!**
Поздравляю Вас с праздником!
Holiday greetings to you!
[холиди гритингз ту ю!]
**Учительсен кунĕ ячĕпе!**
С днем учителя!
Happy Teacher's Day!
[хэппи тичэз дей!]
**Вĕрентекенсен кунĕ ячĕпе саламлатăп!**
Наилучшие пожелания в День учителя!
Best wishes for the Teacher's Day!
[бест вишиз фо зе тичаз дей!]
**Çуралнă кун ячĕпе!**
С днем рождения!
Happy birthday!
[хэппи бэздей !]
**Ку чечексем Сире валли.**
Эти цветы Вам.
Some flowers for you.
[сам флауаз фо ю.]
Ăнăçусем сунатăп!
Удачи!
Good luck!
[гуд лак!]
**Эпĕ сире … сунатăп.**
Желаю Вам…
I wish you…
[ай виш ю…]
**сывлăх**
здоровья
health
[хэлс]
**телей**
счастья
happiness
[хэппинис]
**ăнăçусем**
успехов
success
[сэксэс]
**Чи лайăххине!**
Всего наилучшего!
All the best!
[ол зе бест!]

Акăлчан чĕлхи урокне ***Галина ЗОТОВА*** (Хĕрлĕ Чутай районĕ, Штанаш шкулĕ) ***ертсе пырать.***

**Александр ПЛЕХАНОВ ӳкерчĕкĕ.**

## Йывăрлăх килсен ан йăнăш

*Мария АРЛАН*

Тавралăх пĕрремĕш юрпа витĕнсен, çу вĕçĕнче кун çути курнă мулкач çури хăраса ӳкет те куççульпе макăрма тытăнать.

– Тĕнче мĕншĕн шур тумпа витĕнчĕ? Капла ман тяппасем те шăнĕç... – тет.

– Ан хăра, пĕчĕкçĕм. Юр çуни хĕл çитнине пĕлтерет, – лăплантарать амăшĕ.

– Мĕн вара вăл хĕл? – ыйтать çура каллех тăр-тăр чĕтресе.

– Çут çанталăкăн йĕрки çавнашкал: çуркунне çитет те иртет, çу килет те каять. Кĕр çитсен вăл та иртет. Ун хыççăн вара хĕл çитет. Унпа сыв пуллашсан пĕтĕм тĕнче ăшăнать. Халь, ак, хĕл çитет. Çилĕ те хаяррăн вĕрме тытăнчĕ. Хĕвелĕ те ăшăтса çитереймест, – ăнлантарать амăшĕ пепкине.



– Хӳтлĕх ăçта тупăпăр? Кашкăр та инçетренех курĕ те тытса çиййĕ пире…

– Ан хăра, эпир лапсăркка чăрăш айне çак юртанах йăва тăватпăр. Хаяр çил те пире илеймĕ. Кĕрĕке те улăштарăпăр. Пирĕн çăм шап-шурă пулĕ. Тискер чĕр чун асăрхаймĕ.

– Мĕн çисе пурăнăпăр? – каллех пăшăрханать çура.

–Э-э-э, ачам, ан пăшăрхан! Куратăн, пирĕн шăлсем епле çивĕч. Йывăç турачĕсем тутлă апат вырăнĕнче пулĕç, – тесе çурана лăплантарчĕ те хăй хыççăн вăрмана ертсе кайрĕ.

***АВТОР ӳкерчĕкĕ.***

**Ваттисем çапла калаççĕ:**

- Йывăрлăх та йыша парăнать.
- Йывăрлăх умра, çăмăллăх хыçра.
- Йывăр ĕçрен ан пăрăн.

тантăш
49 №, 2013, раштав, 5





● ХУПЛАШКАРИ СĂН ӲКЕРЧĔК

# «Юрлакан чĕресем»: олимп старчĕ!

Вăхăт иртрĕ, лару-тăру лăпланчĕ, çавăнпа хăрушла вăрттăнлăха уçса парар. Чӳкĕн 16-мĕшĕнче Шупашкар чутах сирпĕнсе каятчĕ: мĕнле тĕрĕс-тĕкел юлчĕ чун юратнă хула – никам та пĕлмест, наука та вăйсăр – ним те калаймасть. «Юрлакан чĕресем» ушкăн акăшмакăш хăватлă та хĕрӳ концерт кăтартнăран тĕнче уçлăхĕнче Шупашкар апокалипсисĕ чутах тытăнмарĕ. 900 вырăнлă филармони залне туп-тулли çын пухăнтăр-ха, куракансен умне хавхаланулăхĕпе тĕнчене халь тесен халь кутăн çавăрса хума хатĕр Екатерина Семенова, Виктория Павлова, Владимир Тимофеев, Рина Светопольская, Светлана Иванова (Трофименко) тухччăр-ха: мĕн пулма пултарать? Юрать, Атăл тăвалла юхма тапратмарĕ. Филармони çуртĕнчи электричество вара концерт вăхăтĕнче заряд паллисене улăштарнă тет: минус вырăнне плюс, плюс вырăнне минус ылмашăннă. «Юрлакан чĕресемшĕн» электричество ухмаха ерни, наука парадоксĕ ним те мар – вĕсем «чĕрĕлле» çеç юрлаççĕ, «плюсовка», «фанера» – мĕнне пĕлмеççĕ те. Ушкăн продюсерĕ тата юрă-сăввисен авторĕ Вăрăм Палюк (Владимир Рыбкин) хастарсене ахальтен-им кастинг ирттерсех суйланă? Суйлама пулăшаканĕ чăваш юрри-кĕвви тĕнчин мэтрĕ Юрий Кудаков хăй пулнă. Туятăр пуль?.. Amicus Rybkin, sed magis amica veritas... Ахальтен мар паллă чăваш композиторсем те куç хывнă пултаруллă ушкăна.

Хăйсем те пĕлмесĕр, ачалăхрах, шкулта-клубра сольфеджио экзаменне тытнă хастарсене 600 ытла юрă, 35 сăвă кĕнеки авторĕ Вăрăм Палюк халĕ ĕнтĕ юрă-кĕвĕ тĕнчин Олимп тăвне парăнтарма çула илсе тухать. Çăмăл мар, çулĕ те кĕске мар, продюсер шучĕпе – «альпинистсен» çичĕ пĕлĕт тăррине хăпарма çулталăк çурă вăхăт иртет. Мĕн-мĕн те, ăна-кăна шутлама та, хальччен нимĕнле продюсер ури ярса пусман кĕтесе те кĕрсе тухма пĕлет Владимир Рыбкин. Ансат арифметика. Пĕр юрра халăх умне кăларма сахалтан 10 пин тенкĕ кирлĕ. «Юрлакан чĕресем» концертра 10 юрă ытла юрларĕç. Ĕçе пула апат çиме, шыв ĕçме кăна мар, хушăран сывлама та манса каякан продюсер мĕн хак спонсор пулăшăвĕ тупма пултарнă?

Тепĕр вăрттăнлăха та уçар. Филармони залне пуçтарăннă эстрада эстечĕсен 1000 çынна яхăн çарĕ умне тухиччен «Юрлакан чĕресем» Патăрьел, Комсомольски, Çĕмĕрле районĕсенчи халăха чĕре юррисене итлеттернĕ. Репетицисен гастрольне ăнăçлăн вĕçленĕ хыççăн тин чăваш эстрада çăлтăрĕсем веç иртĕнтерсе янă Шупашкар халăхĕ умне тухнă. «Чĕресен» ăнăçăвĕ вара сăпайлăн кĕтнинчен те ытларах килсе тухнă. Вырăсла калашле, публика неистовствовала! Пурнăçĕнче темле аншлаг та курнă Владимир Рыбкин та çак таранах ăнасса кĕтмен. Ушкăн хастарĕсем пирки каламастпăр та – вĕсем сцена çинчех шăкăрин йăванса кайма хатĕр пулнă. Систернĕччĕ вĕт, чутах апокалипсис хыпса илетчĕ Шупашкарта.

Хăçан та пулин «Юрлакан чĕресем» – «Олимп хуçисем» кĕнеке кăлараççех пуль ĕнтĕ. Çавăнпа пулас бестселлер валли ушкăн хастарĕсем пирки кĕскен каласа парас.

Катя Семенова. Çĕмĕрле районĕнчи Анат Кăмашара çуралнă. «Кĕмĕл сасă» конкурс лауреачĕ. «Сăпкара выртнă чухнех, анне мана юрă юрласа сиктернĕ. Унăн çепĕç сассипе çывăрса кайнă. Ӳснĕçем хам та юрлама пикентĕм. Хитре юрлас, анне пек çепĕç саслă хĕр пулас килетчĕ. 1-мĕш класра вара пуçласа юрă çыртăм, тĕрлĕ конкурса çӳреме тытăнтăм. Саланчăкри ача-пăча музыка шкулне те вĕренме кĕтĕм. Пĕрре, Культура училищинчен вĕренсе тухсан, Володя Тимофеев шăнкăравларĕ, Вăрăм Палюк йĕркеленĕ ушкăна чĕнчĕ».

Света Иванова. Грузире, Поти хулинче çуралнă, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Чăнкассинче ӳснĕ. «Ака вĕçĕнче «Çĕнĕ ятсем» дискăн концерт презентацийĕ иртрĕ. Эпĕ унта юрă юрларăм. Владимир Николаевича эпĕ юрлани килĕшнĕ, хăйĕн ушкăнне чĕнчĕ. Юрлама ача садĕнчех тытăннă. Чăн малтан халăх умĕнче «Офицерсен çуртĕнче», анне ĕçĕнче, «Шурă бескозырка» юрланăччĕ. 8 çулта чух Грузирен куçса килтĕмĕр. Шкулта вĕреннĕ чухнех район Акатуйне, «Çĕнĕ ятсем», «Вирьял шевлисем» конкурссене хутшăннă».

Рина Светопольская. Елчĕк районĕнчи Курнавăшра çуралнă. «ЧППУри музыка факультетĕнче вĕренетĕп. Манăн çывăх тус Виктория Павлова «Юрлакан чĕресем» ушкăнра. Юрий Кудаков вĕрентекен мана та çав ушкăна кайма сĕнчĕ. Викăпа пĕрле юрлама хăнăхнăскер, хаваспах килĕшрĕм. Авăн уйăхĕнчен эпĕ – ушкăн солистски. Юрлама ачаранпах юрататăп».

Вика Павлова. Комсомольски районĕнчи Тăманлă Выçлинче çуралнă. «ЧППУра вĕренетĕп. Владимир Рыбкин пуш уйăхĕнче музыка факультетне лайăх юрлакансене суйлама килнĕччĕ. Юрий Кудаков мана йышăнма сĕннĕ ăна. Факультетра «Юрай» фольклор ансамбльне çӳретĕп».

Володя Тимофеев. Çĕмĕрле районĕнчи Юманайĕнче çуралнă. «1-мĕш класра вĕреннĕ чухнех «Çăлтăрчăк» ушкăн йĕркеленĕччĕ. 6-мĕш класра пирĕн ушкăна Франције илсе кайса та хавхалантарчĕç. 8-мĕш класран пĕччен юрлама тытăнтăм. 11-мĕш класра Владимир Рыбкин сăввипе юрă та çырнăччĕ. 2012 çулта «Пĕр классем» тетелте Владимир Николаевич пĕлтерĕвне вуларăм – çакăн пек лекрĕм «Юрлакан чĕресене».

Владимир Рыбкин генерал мар пулсан та, ушкăн стратегине, тактикине мал курăмлăн та оперативлăн йĕркеленĕ. Йăлтах каласа памăпăр, продюсерăн хăш-пĕр шухăшне çеç çутатăпăр. Ушкăн репертуарĕ çĕнелсех пырĕ, вырăсла юрăсем те пулĕç. Гастрольсен географийĕ анлăланĕ. Ушкăн ансамбль шайнех çитĕ, инструмент калакансем çеç мар, ташлакансем те пулĕç. Ăсталăха ӳстерес-туптас ĕç пĕр самант та чарăнмалла мар. Концерт çи-пуçне те аталантармалла. Стратеги планне веçех çутатмăпăр – пурнăç кăтартĕ вăл вăй илсе пынине. Çакна пĕлтерер: **«Юрлакан чĕресем» çитес пысăк концерта тепĕр çул, акан 25-мĕшĕнче – Чăваш чĕлхи уявĕнче – ирттерме палăртнă.**

***Евгени ВОЛЧЕЦКИ.***

● ÇЫРĂНТАРУ – 2014

# Çамрăк пуçпа ватăлар мар – кайса «Самант» çырăнар!



Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Мăн Этмен шкулĕнче 10-мĕш класра вĕренекенсем чăваш çамрăкĕсене «Самант» çырăнма чĕнчĕç. Шухăшĕсене те шăрçаласа пачĕç. Класра 12 хĕр те 10 каччă вĕренет. Вĕсем 12 ялтан çӳреççĕ. Пур ĕçре те маттур яшсемпе хĕрсем ытлашшипех сăпайлă: сăн ӳкерттерер тесен вăттаннипе тарса пĕтрĕç, хăюллисенчен хăюллисем çеç «Саманта» тухма хăрамарĕç.

## Мăн Этмен çамрăкĕсен пилĕсем:

- Вулакансен шучĕ ӳссех пытăр!
- Журналăн малашлăхĕ пысăк пултăр!
- «Саманта» ман ачасем те, мăнуксем те вулаччăр!
- Эпир çамрăк, вăй нумай, журнал та пиртен кая юлмасăр ĕлкĕрсе тата аталанса пытăр.
- Пурнăçра пурин те телей пултăр.
- Çамрăксене журнал савăнтарса тăтăр, шухăшлама вĕренттĕр.
- Ăнăçу та ăнтăлу пурне те!
- «Самант», «Тетте» тата «Тантăш» редакцийĕсене ăнăçу сунатăп, вулакансен йышĕ нумайланасса шанатăп.
- Яланах çамрăксен уттипе утмалла пултăр.
- Хастар вулакансем – «Самант» тусĕсем, сире вĕренӳ çулне ыррăн вĕçлеме ăнăçу сунатпăр.
- Мода çамрăкĕсене те курасчĕ.
- Çын телейне туртса илсе пурнăç тăваймастăн. Çакна асра тытар!
- Çĕнтерӳ çулĕ çăмăл мар. Эпир яланах малалла! Малалла – «Самантпала»!

# Чăваш çи-пуçĕ – халăх кун-çулĕн тĕкĕрĕ

Пирĕн тум тăван халăх культури сĕм авалтан йĕркеленсе аталаннине кăтартать. Ӳнер тата илем курăмне, кăмăл-сипет тата философи тытăмне, çынпа çут çанталăк тĕввине çутать çи-пуç.

Халăх костюмĕ паян та наци паллин чи витĕмлĕ сăнарлăхĕ. Чуна илĕртекенни вара – ал ĕç искусствин тĕрлĕ мелĕпе пĕлсе усă курни: тĕрĕ, эрешлĕ тĕртни, вĕт шăрçапа тата ылтăн-кĕмĕлпе капăрлатни.



Пĕтĕм Раççейри «Эпĕ – тăван халăхăн тĕпренчĕкĕ» фотоконкурса хутшăнма шут тытсан, модельсем пулма эпир 8 «а» класра вĕренекен Наталия Клочковăпа Дарья Филипповăна шанас терĕмĕр. Хĕр упраçсем валли паянхи куна юрăхлă, çамрăксен модипе килĕшӳллĕ, хальхи материалсен пуянлăхĕпе мал курăмлатнă çи-пуç суйларăмăр.

Хĕрсем çак тума кула-кулах тăхăнчĕç. Кайран хăйсене тĕкĕрте курчĕç те – тĕлĕнсе хытсах кайрĕç. Мĕн курнине ĕненмеççĕ! Юмаха лекнĕн туйса илчĕç хăйсене. Чăваш пикисен ытарайми илемлĕ тумĕ вĕсене пачах урăх сăнар пачĕ: вĕсем пекки тĕнчере никам та çук! Хамăр та тĕлĕнсе кайрăмăр: пач урăх хĕрсем умра. Хальччен курман та тейĕн. Кун пеккисем патне пыма та именмелле, калаçма та вăтанмалла. Патша хĕрĕсем пек куç тулли тăраççĕ. Урăх тĕнчерен, тен, пуласлăхран çитнĕ пекех. Кĕвентепе тулли витресем çакса хĕр упраç кайăк вĕçнĕн ярănса утасса та ĕнентĕмĕр. Урампа пынă пулсан вĕсене хĕрарăмсем юратса, çуттăн тунсăхласа сăнатчĕç, çамрăклăхне аса илетчĕç, вĕсен вăхăтĕнче çакнашкал тум пулманнишĕн кулянса ассăн та сывлатчĕç. Çамрăк пикесем пирĕн чиперуксене: «Çакнашкал ытла хитре пулма юрамасть!» – тесе ăмсанатчĕç, каччăсем вара: «Паллашма хăю мĕнле çитерер-ши?» – тесе аптратчĕç.

Фотосессире самаях «асапланчĕç» пирĕн хĕрсем. Чи ăнăçлă сăн ӳкерчĕксене Пĕтĕм Раççейри фотоконкурса ярса патăмăр. Ăмăрту пĕтĕмлетĕвĕсене пĕлсен хамăр телее те ĕненме хăрарăмăр: Дарья Филиппова 2-мĕш вырăна, Наталия Клочкова 3-мĕшне тивĕçрĕç.

Тăван халăх кун-çулĕ, чĕлхи, йăла-йĕрки çынсене ытларах илĕртме тытăнчĕ пек туйăнать. Тумтир дизайнерĕсем несĕлсен çи-пуç ытарлăхне, уйрăмлăхне тишкереççĕ. Çамрăксен модипе килĕшӳллĕ, хальччен пулман модельсене калăплаççĕ. Наци костюмĕ – чăнах та халăх мухтавĕ те чапĕ. Чăваш çи-пуçĕ – халăх кун-çулĕн тĕкĕрĕ çеç мар, пуласлăха карăннă эрешлĕ кĕпер те тесе калас килет пирĕн.

***Ираида ПАВЛОВА, Лариса МЕФОДЬЕВА.***
Шупашкар, 17-мĕш шкул.

# Анлă тавра курăмлă та пултаруллă

## Юратнă чăхха хурчăка тытрĕ

**Иккĕмĕш класра вĕренекен Дима Андреев вулама юратнăран тăхтавра библиотекăна васкарĕ. Çӳлĕк çинче паллă поэт кĕнеки куçĕ тĕлне пулчĕ.**

Вырăсла сăвă страницисене хаваспах уçкаласа пăхрĕ. Тепĕр енне çавăрчĕ те... унта чăвашла шăрçаланă иккен.

– Ольга Васильевна! Йăнăш тупрăм! Вырăсла çырнă çырнă та, ак кайран чăвашла! Çыравçă хăй тĕрĕс мар тунине ăнланса та юлайман ĕнтĕ, – терĕ библиотекарь патне чупса пырса.

Ольга Васильевна кĕнекене алла илчĕ, унтан шăпăрлан çине пăхса йăл кулчĕ.

– Йăлтах йĕркеллĕ. Вырăс тата чăваш ачисем валли кăларнă кĕнеке ку, – ăнлантарчĕ вăл самантрах.

– Пĕлмесĕр каларăм апла, каçарăр, – айăплăн пăхкаларĕ арçын ача.

...Унтанпа икĕ çул иртрĕ. Дима паян та кĕнекесĕр пурăнаймасть. Акă урок тухнине систерсе шăнкăрав янăрарĕ те тăваттăмĕш класра ăс пухакан Дима Андреев библиотекăна васкарĕ.

– Ĕнер çеç килтĕн-çке, вуласа та тухрăн-и? Ытла хăвăрт, – тĕлĕнмеллипех тĕлĕнчĕ Ольга Васильевна Кириллова библиотекарь арçын ача çине пăхнă май.

– Паян пичче валли илсе каяс терĕм. Канмалли кунсенче киле таврăнать вăл. Вăхăтне усăсăр ан иртертĕр тетĕп-çке, мĕн те пулин çĕнни вуласа пĕлтĕр, – йăл кулса ăнлантарчĕ шăпăрлан ăна.

– Канашра вĕренекен пиччӳн ăçтан вăхăт пултăр халĕ? Умра – хĕрӳ тапхăр. Зачетсемпе экзаменсем пуçланаççĕ ахăртнех. Ун пек вăхăтра чăрмантарма кирлĕ мар ăна, – ăс пачĕ ырă кăмăллă хĕрарăм.

– Кунта нимĕнле йывăрлăх та курмастăп эпĕ. Сессие хатĕрленнĕ чух канса илмелле алла кĕнеке тытнăран нимĕн те пулас çук. Вăл вуласа тухсан эпĕ те çак хайлавпа паллашас кĕмĕтлĕ-ха, – хăй шухăшне çийĕнчех пĕлтерчĕ хайхискер.

Ларма-тăма пĕлмен арçын ача килте ĕçсĕр лармасть. Пӳртре тусан шăлать. Урай, кашăкчашăк çăвать. Апат пĕçерме те юратать.

– Çăмартапа кăлпасси ăшалама кăмăллататăп. Анчах нумай пулмасть хурчăка куç умĕнче юратнă чăхха тытса кайрĕ. Эх, çăмартине шултăра та нумай тăватчĕ. Питĕ шел, – ассăн сывларĕ шăпăрлан.

Мал ĕмĕтлĕ Дима ӳссен строитель пуласшăн.

– Йывăр професси, тен, шухăшна улăштаратăн, – тесен самантрах хирĕçлет.

– Ман çума пĕчĕклех куршанак çыпăçнă, çавăнпа та тархаслама кирлĕ мар. Нумай пулмасть аттепе йытă йăви ăсталарăмăр. Мĕн тери хитре пулчĕ! Кăçал çуркунне анне сухан туянчĕ. Ăна кĕтсе тăрас темерĕм, пĕчченех тытрăм та лартрăм. Уншăн аслисем мухтарĕç çеç. Эпĕ килтисене пулăшма питĕ юрататăп çав, – хавхаланса калаçрĕ Йĕпреç районĕнчи Пучинке шкулĕнче ăс пухакан Дмитрий Андреев.



## Аттене курас килет... Анчах вăл пире аса илет-ши?



**Питĕ ĕмĕтленме юратать Саша Егоров. Паян килне çитсен сумкине урайне хучĕ те диван çине вырнаçрĕ. Футболла выляса ывăннăскер часах тутлă ыйха путрĕ.**

...Пултаруллă футболист вăл. Çавăнпа ăна командăри тусĕсем кăна мар, пурте юратаççĕ. Урамра тĕл пулакан та унран автограф ыйтать. Тăван килне вара хавас кăмăлпа каять. Кукамăшĕпе амăшĕ валли тем тĕрлĕ кучченеç туянать вăл. Вĕсене кирлĕ чухлĕ нухрат парса хăварать. «Анне, тинех ура çине тăтăмăр. Кукамайпа иксĕр мана пурнăç çулĕ çине тĕрĕс-тĕкел тăратас тесе ырми-канми тăрăшрăр. Халĕ манăн черет сире пăхма», – терĕ Саша çывăх çыннисене ыталаса.

Юратнă кушакĕ мăрăлтатса чĕрçи çине кĕрсе ларнăран ыйхăран самантрах вăранчĕ арçын ача. «Эх, ку самант мĕншĕн чăн пурнăçра мар-ши?» – ассăн сывласа каласрĕ вăл хăйпе хăй.

Саша Саратов облаçĕнче çуралнă. Пиллĕкре чухне амăшĕпе иккĕшĕ Вăрмар районĕнчи Мăнçырмана куçса килнĕ.

– Аттесĕрех килтĕмĕр. Унăн халĕ урăх çемье. Манăн вара ăна питĕ курас килет, анчах аннепе иксĕмĕр пирки шутлама пĕлет-ши вăл? Иккĕленӳллĕ. Ăна эп кăшт çеç ас тăватăп. Мăйăхлăччĕ. Пĕрле комбайн çинче лартса çӳрени халĕ те асрах-ха. Пĕрремĕш класра вĕренӳре йывăрччĕ. Ара, чăвашла пĕлменни ура хуратчĕ мар-и? Халĕ чăваш чĕлхи – чи юратни, – мăн çын пекех пуплерĕ улттăмĕш класс арçын ачи. – Питĕ Вăрмарти спорт шкулне çӳрес килет. Укçа çитсе пыманни ура хурать. Эх, атте пĕрле пулнă тăк-и, пур пĕрех çăмăлрах пулатчĕ. Юрать кукамай пур манăн, вăл хаз газпа çутăшăн тӳлет. Мана валли тăхăнмалли те, çимелли те илсе парать. Юратнă аннем те пĕр маншăн тăрăшать.

Саша питĕ вулама кăмăллать. Акă кăçал çуралнă кунĕнче ăна пĕр пĕлĕшĕ кивĕ кĕнеке пачĕ. Страницисем кивелсе, çурăлса пĕтнĕ пулин те çакă парне ăна питĕ килĕшрĕ.

– Лайăх хайлавсем пулни каламасăрах паллă. Паян çĕрĕпе вулатăп. Ыран вара унти сăнарсем тăрăх тĕрлĕ ӳкерчĕк тăвăп, – тав тунă май хĕпĕртерĕ вăл.

Çав кивĕ кĕнеке уншăн халĕ чи хаклă парне.

## Ылтăн алăллă Владик

**Кĕçĕн класра вĕреннĕ чухне хĕллехи куна çав тери юрататчĕ Владик. Аслашĕ йывăçран ăсталаса панă пăшалне йăтса урама тусĕсем патне вăрçăлла выляма васкатчĕ. Унăн парнине пăхса пурте ăмсанатчĕç.**

«Манăн çакăн пек чаплă пăшал пулсан-и?» – терĕ пĕррехинче пĕр арçын ача. Владик нумай шухăшласа тăмасăрах пăшалне ăна тыттарчĕ. «Çакна парнелетĕп», – терĕ кăмăллăн.

Шăпăрлан мĕн тери хĕпĕртерĕ ун чухне! Владике вара аслашĕ кăшт ятласа та илчĕ. «Теттесене çухатса çӳретĕн», – терĕ аллине пăтапа пуртă тытса.

Владик халĕ хăй те ылтăн алăллă. Ашшĕпе е аслашĕпе йывăçран сĕтел-пукан ăсталать. Карçинкка çыхма та вĕсенченех вĕренчĕ. Амăшне тĕпел кукринче усă курмалли хатĕр-хĕтĕр тем чухлех парнелерĕ вăл. Çавăнпа шкултан таврăнсан, килти ĕçсене пурнăçласа пĕтерсен, мастерскойне васкать.

– Килте висĕ ĕне, çавăнпа аннене пулăшас тĕллевпе каçсерен лупас айне тухатăп. Ĕне сăвататăп, унтан вĕсене шыв ĕçтерсе апатлантаратăп. Айĕсене улăм саратăп. Картиш тулли выльăх-чĕрлĕхпе вăхăчĕ те сахалтарах çав. Ĕçлемелли тупăнсах тăрать. Çитменнине, килте кĕçĕнни пулнă май, урай çăвасси те, апат пĕçересси те, пӳрт-çурт тирпейлесси те ман çинчех, – тет Улатăр районĕнчи Суйкăнри Владислав Кондратьев.



Лара-тăма пĕлмен арçын ача тусĕсемпе ваттисене пулăшма çӳрет. Ак халь хĕрӳ ĕç пуçланчĕ. Юр хырмалли нумай. Хайсене ырă тăвакансене пылак кучченеçпе сăйлама манмаççĕ кинемейсемпе мучисем.

Владик вĕренӳре те хастар. Пур предметпа та «5» паллăпа ĕлкĕрсе пырать. Шкулти общественăлла ĕçсене хастар хутшăнать.

Мал ĕмĕтлĕ çамрăк ашшĕ çулнех суйласшăн. Вăл Мускаври аслă шкулта тарăн пĕлӳ илсе хастар педагог пуласшăн.

– Атте пекех физикăпа математикăна кăмăллатăп. Кирек епле задача хуравне те çăмăллăн тупатăп. Тус-юлташсене пулăшма та ӳркенместĕп. Паллах, тетраде çырса илме памастăп тӳрех. Ăнланман темăна тепре пăхса тухса çĕнĕрен хĕрӳ ĕçе пуçăнатпăр, – тет Владик.

**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕсем.**

*Луиза ВАСИЛЬЕВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

Тантăш
49 №, 2013, раштав, 5



Александр МЯСНИКОВ

# Шăл мыскари



Регистратура чӳречи умĕнче сылтăм пит çăмартине аллипе тытнă маййăхлă пенсионер тăрать.

– Ниночка, хĕрĕм... Урăх чăтма хал çук. Ыратакан шăла пĕр шелсĕр кăларасчĕ! – терĕ аран-аран калаçкаласа.

– Федя пичче, шăл тухтăрĕ, Надежда Ивановна, хулана конференцие кайнă. Ирина та çук. Вăл чирленĕ. Унăн температура хăпарса кайнă та килте вырăнпах выртать. Шел, çавăнпа сире йышăнакан çук, – шеллевлĕн хурав пачĕ поликлиникăра вăй хуракан хĕрарăм. – Надежда Ивановна ыран мар тепĕр кун çес ĕçе тухать. Мĕнле те пулин чăтмалла ĕнтĕ халĕ сирĕн. Аптекăран эмел илĕр те, кăшт та пулин çăмăл пулатех.

Вăл хут çине эмел ятне çырчĕ те ăна Федор Кузьмича тыттарчĕ.

– Чимĕр-ха, чимĕр! Авă тепĕр урамра тӳлевлĕ стоматологи поликлиники уçăлнă. Унта кайса пăхмастăр-и? Эсир вĕт запасри аслă прапорщик, тен, сире хакне чакарĕç.

Ырă кăмăллă хĕрарăма тав тусах тухса кайрĕ Федор Кузьмич.

Урамра кайăксем шăрантарса юрă юрлани, йывăçсем чечеке ларни ăна пĕрре те савăнтармарĕ. Ыратакан шăлне сăтăркаласа малалла утрĕ. Акă «Сывă шăлсем» тесе çырса хунă поликлиника тĕлне çитсен тăпах чарăнчĕ. Унтан пĕтĕм хăюлăхне пуçтарса алăк уçса шала кĕчĕ. Пӳлĕм тасалăхĕ ăна тĕлĕнтерчĕ. Йĕри-тавра тап-таса. Тĕрлĕ журналтан касса илнĕ ӳкерчĕксене стена çине çыпăçтарни те çав тери килĕшӳллĕ. Авă, ӳкерчĕкри хĕрсемпе каччăсем йăл кулса пăхаççĕ Федор Кузьмич çине. Кĕтесре пысăк аквариум. Унта ишсе çӳрекен икĕ пысăк пулă хăйне евĕр илемлĕ.

– Ырă кун, иртĕр шалалла, тархасшăн, – кăмăллăн кĕтсе илчĕ ăна хитре сăнсăпатлă пике телефонпа калаçма пăрахсах. – Мĕн сăлтавпачĕ-ши?

– Эй, мĕн каласси... Шăл канăç памасть вĕт... – терĕ ватă çын питне-куçне пĕтĕрĕнтеркелесе.

– Малтан ят-шывна хут çине çырар-ха. Паллаштарсамăр хăвăрпа.

– Федор Кузьмич Сергеев, – самантрах хурав пачĕ пенсионер.

Компьютер умĕнче ларакан хĕр вăл мĕн каланине çырса пычĕ.

– Халĕ ӳкерчĕк тăвăпăр та сире тухтăр кирлĕ канаш парĕ, – лăпкăн çеç пăçăрхиллех калаçрĕ хĕр. – Анчах кунта пирĕн йăлтах тӳлевлĕ...

– Нимĕнле ӳкерчĕк те кирлĕ мар, – пăлханса кайрĕ пенсионер. – Малтан эсир мана хакне калăр-ха, ĕçне пуçăниччен...

– Тархасшăн, паллашсамăр. Кунта йăлтах çырса ăнлантарнă, – тесе пике ун еннелле хулăм папка тăсрĕ. Ак Федор Кузьмич шурса кайрĕ.

– Эсир мĕн! Çынран кулатăр-им? – тарăхса калаçма тытăнчĕ килнĕ хăна. – Пĕр шăл кăларма пилĕк çĕр тенкĕ илетĕр-и? Пĕлетĕр-и, эпĕ çак укçапа мĕн кăна туянма пултаратăп!

«Çăкăр – вун икĕ тенкĕ... Чим, пилĕк çĕре вун икке пайласан миçе пулать-ха? Хĕрĕхе яхăн ахăртнех... Тепĕр тесен, ку нухратпа çирĕм пилĕк пачка сахăр туянма пулать вĕт! Хура тул пăтти те юрататăп-ха эпĕ...», – шутларĕ хăй ăшĕнче çав вăхăтра. Енчĕкне туртса кăларчĕ, унта ваккисем кăна. Пĕр ик çĕр тенкĕ пулать ахăртнех. Шалти кĕсьере кирлĕ куна хăварнă хут укçа пин тенкĕ пур-ха та...

– Сире тӳлевсĕрех тĕрĕслев витĕр кăларăпăр, куншăн ан пăшăрханăр. Ветеран пулнине çирĕплетекен ĕнентерӳ хучĕ пур-и çумра? – йăл кулса ыйтрĕ чипер хĕр.

– Пурри пур та, анчах сире валли мар! – сассине хăпартсах хуравларĕ Федор Кузьмич. Çаврăнчĕ те алăк еннелле таплаттарчĕ, хăй кăмăлсăррине каллех палăртрĕ. – Кур-ха вĕсене! Хапсăнчăксем! Пĕр шăлшăн пилĕк çĕр тенкĕ хырса илесшĕн!

Пăлханчăк кăмăллă Федор Кузьмич аптекăна кĕме мансах вокзала васкарĕ. Билет илсе автобуса кĕрсе ларчĕ те çирĕм минутранах ялне çитрĕ. Тӳлевлĕ поликлиникăна кĕрсе тухнине мăшăрне калас темерĕ Федор Кузьмич.

Хапха çывăхĕнче вăл Гришăна курчĕ.

– Мĕскер эс, пограничник, ытти чухнехи пек хаваслă мар? – ыйту пачĕ ăна кӳршĕ кусран пăхса. – Тем пулман пулĕ те?

– Ах, шăл... канăç памасть. Ыратать те ыратать, вăхăтлăха та пулин чарăнмасть вĕт-ха...

– Эс, Кузьмич, ут кăшкарĕ чăмласам, тен, çăмăлрах пулать, – канаш пачĕ Гриша пичче. – Иртмесен вара... чĕрĕ салă ас тивсе пăхсам.

– Мĕн лаши пирки калаçатăр эсир? – хапха алăкне уçнă май кăсăкланчĕ Вера Ильинична. – Ну, Федя, сан мĕнле ĕçсем унта?

– Чаплах мар. Тухтăрсем вырăнта çук пирки ĕç ăнмарĕ. Ыран мар тепĕр кун пыма кларĕç, – тарăхуллăн аллине лаш сулчĕ мăшăрĕ.

– Ак тата, – хĕрхенсе пăхрĕ Вера Ильинична ун çине. – Шăлу çине кушак ути курăкĕн çулçине хурса пăхсам.

– Кузьмич, тен, Саша ветеринар патне çитсе килетĕн? Вăл вăкăрсемпе ĕнесен шăлĕсене питĕ аван, ыраттармасăрах кăларать. Чăн сăмахăн суйи çук, хам куçпа хам курнă. Сана та вăл пулăшатех, ырă кăмăллă çынна инкекре пăрахмастех, – каллех сăмах вылятма тытăнчĕ Гриша.

– Гриша пичче, атя, вĕçтер-ха кунтан! Кун пек канашсемпе Сидоровна патне кай. Сана вăл уншăн самантрах вăрăм чĕлхӳне кĕскетсе ярать, – тарăхрĕ Вера Ильинична кӳрше хăмсарнă май.

– Ах, çав хĕрарăмсем шӳте ăнланмаççĕçке! – терĕ Гриша хыçалалла висĕ-тăватă утăм чакнă май.

Каç енне Федор Кузьмич йывăрлансах çитрĕ. Пит çăмартипе шăл тунисем шыçрĕç. Ыратнинеирттерес тесе халăх меслечĕпе усă курса мĕн кăна туса пăхмарĕ-ши? Тĕрлĕ сиплĕ курăк хучĕ шăлĕ çине, анчах ним уссине те туймарĕ.

– Урăх чăтма хал çитмест... Хăть выртсах вил. Ыратать те ыратать! – канăçсăрланчĕ ветеран.

Çĕрĕпе асапланчĕ ватă çын. Пӳртре кĕтесрен кĕтесе утрĕ. Вера Ильинична та мăшăрĕшĕн питĕ пăшăрханчĕ. Вăл та пĕр чĕптĕм куç хупмарĕ.

Чăтайман енне ирхи çичĕ сехетрех тухса кайрĕ тӳлевлĕ поликлиникăна Федор Кузьмич. «Эй, пилĕк çĕр тенке шеллесен! – шутларĕ вăл çул çинче. – Ыратни çеç иртсе кайтăрччĕ».

Поликлиникăна вăйсăррăн кĕрсе тăчĕ пенсионер. Тухтăрпа медсестра ыйту паричченех хăй ветеран пулнине çирĕплетекен хута кăларса кăтартрĕ. Аллинчи пин тенкĕ хут укçана вара чăмăрĕнчех тытрĕ. Шăлĕ сурнăран калаçма та çав тери йывăр ăна. Çавăнпа ыратакан вырăна пӳрнипе тĕллерĕ. Медсестра пĕр тăхтамасăр ăна рентген тума илсе кайрĕ. Хыççăн – операци пӳлĕмне. Чирлĕ çынна вăл кресло çине лартса шăл ӳкерчĕкне тимлĕ пăхса илчĕ. Шăл ыратнине ирттерекен укол тусан операцие хатĕрленчĕ.

Стоматолог ĕçе тытăнчĕ, чирлĕ çынран тем ыйтрĕ вăл. Федор Кузьмич вăл мĕн калани ăнланмарĕ, апла пулин те килĕшсе пуçне сĕлтрĕ. «Ниепле те ăнланмастăп, мĕн-ма ку тухтăр çаплипех манăн çăварта чакаланать-ха? Хăй сумкинче тем шыранă пек хăтланать. Кăларса пер ĕнтĕ хăвăртрах шăла. Эмелне хĕрхенчĕ курăнать, ыратнине туятăп та вара... Кун пирки епле систерем-ши ăна? Унсăрăн юратнă Зорька лаша пек хур курăп тата», – шутларĕ ветеран пăшăрханса.

Акă куçĕ умне иртни тухса тăчĕ.

...Заставари Зорька янаварăн пĕррехинче шăлĕ ыратрĕ. Ветеринар вырăнта пулманран пурте кулянса ӳкрĕç. Старшинапа салтаксем вылăха епле пулăшмалла-ши тесе пуçĕсене ватма тытăнчĕç.

– Тупнă кулянмалли, – мăнаçланчĕ Иван Голушко ефрейтор. – Пирĕн килте кĕсре пурччĕ. Унăн та пĕррехинче шăлĕ ыратрĕ. Аттепе иккĕн ыратакан шăлне самантрах плоскогубцăпа хĕстерсе туртса кăлартăмăр. Янавар сиссе те юлаймарĕ. Зорькăна та пулăшма хатĕр эпĕ çак самантра.

– Ан курнăçлан-ха, Ваня! – пӳлчĕ йĕкĕте старшина. – Кунта эс каланă пек май килмест. Лашана çывăртмасăр ямалла. Кайран шăлне туртса кăлармалла.

– Димедрол памалла, самантрах ыйха путать! – ăс пачĕ ефрейтор. – Вăрансан пире тав туса пĕтерейmĕ-ха янавар.

Малтанах Федор Кузьмич иккĕленчĕ. Урхамах асапланнине курсан ефрейтор сăмахĕсемпе килĕшрĕ.

– Вунă таблетка эмел нумай пулать ахăртнех, малтанлăха пиллĕк çитет пуль. Кайран куç курать унта, – çирĕплетрĕ старшина.

Çăкăр çине хыпаланса пилĕк таблетка эмел чикрĕ салтак. «Бутерброда» Сергеев лаша тути еннелле тăсрĕ. Зорька ырă мара сиссе-ши, малтанах турткалашрĕ. Кайран аран çисе ячĕ. Кăштахран çемçе улăм çине выртрĕ, çывăрса кайрĕ. Ефрейтор алла хĕскĕч илсе васкамасăр ут патне утăмларĕ. Федор Кузьмич янавар çăварне уçрĕ. Салтак инструментпа ыратакан шăлне çаклатрĕ, анчах çав вăхăтрах хытса ларчĕ вăл.

– Мĕн кĕтетĕн? Туртса кăлар хăвăртрах! – васкатрĕ ефрейтора старшина.

– Лайăхрах çаклатмалла кунта! Вара... – тесе лаша çăварĕнче хĕрсех чакаланма пуçларĕ.

Акă Зорька хăрах куçне, унтан теприне уçса ячĕ те хускалма тытăнчĕ.

– Хыпаланарах йăраланкала! – кăшкăрчĕ пăлханса кайнă Федор Кузьмич.

Салтакăн ĕç-пуçĕ ăнмарĕ, хĕскĕчĕпе лаша çăварне хĕстерчĕ курăнать. Урхамах сасартăках ури çине сиксе тăчĕ, ефрейтор хăйĕн инструменчĕпе таçта çитиех сирпĕнсе кайрĕ. Федор Кузьмич вара аран пăрăнса юлчĕ. Унччен нихăçан та ĕрĕхсе курман янавар витере унталла та кунталла чупкалама тытăнчĕ. Акă хайхискер алăка çĕмĕрсе застава картишне сирпĕнсе тухрĕ. Вăл хыттăн кĕçенни пурте, çав шутра застава пуçлăхĕ Королев майор та, хăйсен пӳлĕмĕсенчен сирпĕнсе тухрĕç.

– Прапорщик, эсĕ кунта мĕнле цирк йĕркеленĕ?! Атя, хăвăртрах тыт хăвăн юлан утна, паттăр Чапай! – тарăхса кăшкăрчĕ застава пуçлăхĕ Федор Кузьмича.

Салтаксем лашана аран тытса лăплантарчĕç. Витерен хĕскĕч йăтнă ефрейтор йăраланса тухрĕ. Лӳчĕркеннĕ тумĕ çине йăлтах улăм çыпçăннă.

– Хохол ветеринарĕ, кала-ха, мĕн тесе лаша шăлне айккинелле туртрăн? Хăв енне туртмаллаччĕ. Ых, çавна та чухлаймарăн! – хăтăрчĕ старшина ефрейтора тарăхса.

– Ăнлансах ĕçе пуçăнăччĕ-ха, атте лайăхах вĕрентнĕччĕ ку енĕпе. Лаши хăй айăплă кунта...

Тепĕр темиçе кунтан заставăна ветеринар таврăнчĕ те Зорькăн каталса юлнă шăл тĕпне çăмăллăнах кăларчĕ. Кăштахран лаша сывалчĕ.

...Стоматологи кресли çинче ларакан Федор Кузьмич шухăша кайрĕ. «Çавăн чухне хамăр ăссăрлăха пула янавара мĕн тери нушалантартăмăр. Эй, мĕн калăн, унтанпа шыв-шур чылай юхрĕ. Çав пăтăрмах ĕнер кăна пулса иртнĕ пек туйăнать халĕ мана», – шутларĕ хăй ăшĕнче.

Шăп çак вăхăтра куçĕ умне Зорька тухрĕ. Сĕлĕ чăмлакан лаша ун çине ăшшăн пăхрĕ. Кĕçех йăл кулса Голушко ефрейтор çитрĕ. Хайхискер хĕскĕчĕ унăн пичĕ патне илсе пычĕ.

– Запасри аслă прапорщик юлташ! Ан пăшăрханăр, ыраттармастăп. Маншăн шăл кăларасси – чăрт сурасси кăна. Сиссе те юлаймăр ак.

Сасартăк стоматолог хăвăрттăн çеç инструменчĕпе шăлне туртрĕ. Кĕтмен çĕртен çапла пулнипе Федор Кузьмич чĕтренсе илчĕ. Ак тухтăр кăларнă шăлне ятарлă витрене ывăтрĕ те каллех ыратакан вырăна чакалама тытăнчĕ. «Мĕн кирлĕ-ха ĕнтĕ халь каллех ăна. Шăл тĕпне хăварчĕ-ши вара?» – канăçсăрланчĕ çаплах ветеран. – Çук, йĕркеллех пулас».

Шурă халатлă çын ниепле те ĕçне вĕçне çитерейменни курăнать, ак каллех ятарлă хĕскĕчĕпе тем туртса кăларчĕ.

– Турă çырлахтăрах! – кăшкăрса ячĕ Сергеев.

– Пулчĕ те, – лăплантарчĕ ăна тухтăр витрене тем пăрахнă май. – Халĕ кăшт канма та пултаратăр, ыратни кĕçех иртет вăл, ан пăшăрханăр. Килте эмел ĕçме ан манăр вара.

Федор Кузьмич кресло çинчен йывăррăн çĕкленчĕ те тенкел çине ларчĕ. Кăштахран ăна медсестра эмел чикнĕ тĕркене тыттарчĕ.

– Юлашки укçине памастăр-им тата? – терĕ запасри аслă прапорщик ун çине ыйтуллăн пăхса.

– Мĕнле нухрат пирки калаçатăр эсир? – тĕлĕнмеллипех тĕлĕнчĕ медсестра.

– Пĕлмĕше персе ан тăрăр-ха, ара, пин тенкĕрен юлнине тавăрса парăр... Эсир манăн шăла кăлартăр-и? Кăлартăр. Манса ан кайăр, пĕр шăл кăларнăшăн пилĕк çĕр тенкĕ, – пăлханса пуплерĕ пенсионер. – Эп сире пин тенкĕ панине манса та кайрăр-им?

– Сирĕнне иккĕ харăс кăлартăмăр-çке, – ăнлантарчĕ вăл. – Шутлама пĕлетĕр пулсан... Тĕрĕсех тухать. Парăм çук пирĕн.

– Халь манăн икĕ шăл çук-и? – терĕ тĕлĕнсе.

– Ним тĕлĕнмелли те çук кунта, – хушша-хуппа кĕчĕ тухтăр. – Пĕр шăлĕ сирĕн йăлтах çĕрĕшнĕ. Унпа юнашарри те йĕркеллĕ марччĕ. Ара, кун пирки хăвăртан ыйтрăм-çке, эсир килĕшсе пуçăра сĕлтрĕр вĕт. Халь кутăнлашса тăратăр.

– Укçине те икĕ шăлшăн патăр, пин тенкĕ, – сăмах хушрĕ медсестра.

– Иккĕмĕшне тĕкĕнме кам хушнă сире! Ăна халех каялла лартса хурăр е пилĕк çĕр тенке каялла парăр! – сассине хăпартрĕ Федор Кузьмич.

– Сире ним те тавăрса памастпăр, – татăклăн каларĕ медсестра. – Калаçса килĕшсех шăл кăлартăмăр вĕт.

– Çапла-и? Таса сывă шăла кăларма сирĕн нимĕнле ирĕк те çук вара. Эп акă кирлĕ çĕре çитсе сирĕн пирки çăхав çыратăп.

– Маншăн пулсан... Хăть те ăçта çитĕр, – терĕ тухтăр. – Халĕ пӳлĕме пушатăр. Ав коридорта чирлисем кĕтеççĕ.

Хĕрелсе кайнă Федор Кузьмич тенкел çинчен тăчĕ те çиллессĕн шăл тухтăрĕ еннелле утăмларĕ. Шикленсе ӳкнĕ хĕрарăм темиçе утăм каялла чакрĕ.

– Маша, укçине тавăрса пар-ха эсĕ ăна! Кур-ха, епле тарăхать вăл, – терĕ хăраса ӳкнĕ тухтăр.

Медсестра сумкинчен хăпăл-хапăл хут укçа туртса кăларчĕ те ăна Федор Кузьмич еннелле тăсрĕ.

– Вăт, вăт, – кăмăлĕ çаврăнса кайнă май хавассăн пуплерĕ пенсионер.

Урамра хăйне алла илчĕ Федор Кузьмич. Кăштахран шăл ыратни те иртрĕ. Кĕсьери хут укçана вырăнтах-ши тесе тепре тытса пăхрĕ. Тути йăл кулчĕ. «Антун мăнукăма тетте трактор илсе парăп. Арăма – кофта. Кĕтмен парнесемпе савăнтарамха юратнă çыннăмсене», – шутларĕ вăл савăнăçлăн.

Тепрер сехетрен ялне çитрĕ вăл. Акă ăна хирĕç мăшăрĕ тухрĕ.

– Федя, саншăн мĕн тери пăшăрхантăм! Федор Кузьмич йăл кулса ячĕ.

– Турă çырлахтăрах, санпа кам мĕн тунă? – кăшкăрсах ячĕ Вера Ильинична.

– Эй, ку ним те мар-ха, – аллине сулчĕ ветеран. – Çавах укçа кĕсьере.

– Мĕнле укçа? – ыйтуллăн пăхрĕ мăшăрĕ ун çине.

– Эп ахаль çеç... Ав, кунĕ паян мĕн тери илемлĕ. Хĕвелĕ вара лайăххах пĕçертет, – тесе сăмаха самантрах аййкинелле пăрса ячĕ.

Федор Кузьмич арăмне ыталаса илчĕ, унтан алран ал çавăтăнса урампа утса кайрĕç.

**АВТОР ӳкерчĕкĕ.**

***Вырăсларан Луиза ВАСИЛЬЕВА куçарнă.***

Уява хатĕрленер-и?

# Хĕл мучи, часрах килсем!

**(Шкулта тата ача садĕнче ирттермелли Çĕнĕ çул уявĕн сценарийĕ)**

**Вылякансем:** Ертÿçĕ, Юр пике, Хĕл мучи, Хĕрлĕ Калпак, Кашкăр, Кушак, Вилĕмсĕр Кащей.

*Юрăсене кирлĕ пек улăштарма пулать. Ачасен тавра курăмне, ăсталăхне, пултарулăхне шута хумалла. Сăнарсене ашшĕ-амăшĕ вылясан уяв тата пуянрах иртĕ.*

**Ертÿçĕ:** Пирĕн зал епле илемлĕ –
Тĕрлĕ тĕслĕ ялкăшать.
Кам унпа паян килемнĕ,
Чĕрене вăл ăшăтать.
Çакăн пек илемлĕ елка
Татах пур-ши, ачасем?
Пăхăр-ха, мĕн чухлĕ çутă,
Çăлтăрсем, çаврашкасем…
Саламлатпăр кашнинех
Çĕнĕ çул уявĕпе.
Ĕнтĕ пуçлар, ачасем,
Юрламашкăн юрăсем.

*(«Елочка-елка» юрă янăрать).*

**Ертÿçĕ:** Уява темшĕн Хĕл мучи килсе çитеймерĕ-ха. Айтăр ăна чĕнсе пăхар, «Хĕл мучи, ау!». Сас памасть. Апла пулсан тепĕр юрă юрлар-ха. Ăна илтсен, тен, çитĕ те. *(«Хĕл мучи» юрă янăрать).*

**Ертÿçĕ:** Хĕл мучи çинчен те юрларăмăр ĕнтĕ. Вăл вара çаплах çук.

*(Алăка шаккаççĕ. Юр пике кĕрет. Юрă юрлать).*

**Юр пике:** Вăрманта, уçланкăра
Пурăнатăп юр çуртра.
Кашниех мана пĕлет
Юр пике тесе чĕнет.
Шурă юр пĕрчийĕсем
Пурте манăн тусăмсем. –
Эй, пуçтарăнăр кунта,
Вĕçсе килĕр ман пата!
Савăнăпăр, кулăпăр
Ташлăпăр та юрлăпăр.

**Ертÿçĕ:** Юр пике, пирĕн ачасем хĕлле, юр çинчен юрă вĕреннĕ. Итлесе пăх-ха вĕсем юрланине. *(«Русская зима» юрă янăрать).*

**Юр пике:** Ну маттур та эсир, ачасем. Мĕнле илемлĕ юрă юрларăр.

**Ертÿçĕ:** Часах Çĕнĕ çул çитет. Ăçташи пирĕн Хĕл мучи? Эпир юрланине те илтмерĕ-ши? Паян пирĕн уява килмест пуль?

**Юр пике:** Мĕнле уяв Хĕл мучисĕр? Темскер мана пăлхантарать.

*(Алăка шаккаççĕ).*

**Ертÿçĕ:** Ан кулян-ха, Юр пике. Ав, шаккаççĕ. Хĕл мучи килчĕ пуль?

*(Хĕрлĕ Калпак юрласа кĕрет, чăрăш тавра ташласа çаврăнать).*

Эпĕ Хĕрлĕ Калпак,
Эпĕ сирĕнпе вылятăп.
Уява эп васкатăп.
Уявпа саламлама
Ачасене хавас.
Эп сире юрататăп,
Чунтанах юрататăп.
Ля-ля-ля, ля-ля.

**Хĕрлĕ Калпак:** Сывлăх сунатăп пурне те. Эпĕ питĕ хавас сирĕнпе тĕл пулма. Уяв ячĕпе саламлатăп. *(Кашкăр кĕрет).*

**Кашкăр:** Итле-ха, Хĕрлĕ Калпак. Эсĕ манран хăрамастăн-и?

**Хĕрлĕ Калпак:** Тата мĕн, санран хăратăп-и? Пăрăн кунтан! Эпĕ çак çулпа асанне патне каятăп.

**Кашкăр** *(ĕнсине хыçса)*: Эпĕ те пыратăп асанне патне.

*(Хĕрлĕ Калпакран карçинккине туртса илет, юрă юрлать. «Ромашки спрятались» юрă кĕввипе «Песня Волка» юрă янăрать))*

Я соберу в момент
Ромашки-лютики.
Доставлю враз.
Скажу бабусе: «Зря
Волков не любите».
*(Чĕр куççи çине ларать).*
К вам постоянная
Любовь у нас.

*(Хĕрлĕ Калпака хулран тытса каяççĕ).*

**Юр пике:** Тăхтăр-ха, Хĕрлĕ Калпак, Кашкăр! Эсир ман асаттене курман-и?

**Кашкăр:** Сухаллăскерне-и?

**Юр пике:** Сухаллăскерне çав.

**Кашкăр:** Кутамккаллăскерне-и?

**Юр пике:** Çавна, çавна.

**Кашкăр:** Тата асамлă патакĕ те пур-и?

**Юр пике:** Пулмалла, пулмалла.

**Хĕрлĕ Калпак, Кашкăр:** Çук, курман. *(Тухса каяççĕ).*

**Ертÿçĕ:** Асатте ăçта кайрĕ-ши? Вăрманта аташса юлмарĕ пуль? Мĕн тăвăрши ĕнтĕ? Ташласа пăхăр-ха.

*«Елочка» юрă. (Алăк шаккаççĕ. Вилĕмсĕр Кащей Хĕл мучи тумĕпе кĕрет).*

**Кащей:** Сывă-и, ачасем! Сывă-и, хăнатыткалать.

**Юр пике:** Эпĕ те асăрхарăм-ха. Яланах ырă кăмăллă, тирпейлĕ асатте паян пачах урăхла. Тем пулнă ăна, нимĕн те пĕлместĕп.

**Ертÿçĕ:** Мĕн тумалла? Мĕнле тĕрĕслемелле?

**Юр пике:** Манăн асатте сăвăсем юратать. Эпир ăна часах тĕрĕслĕпĕр.

*(Кащей мороженăй çисе кĕрет).*

**Кащей:** Çисе тăрантăм, чунăм та уçăлчĕ.



сем! Акă эпĕ те çитрĕм. Ку эпĕ, Хĕл мучи! Ырă кăмăллăскер, савăнăçлăскер, сухаллăскер. Пăхăр-ха ман сухала *(сухалне сăтăрса кăтартать).*

**Ертÿçĕ:** Асатте, мĕншĕн сан сухалу тĕссĕр?

**Кащей:** Э-эпĕ... Мĕншĕн тесен пĕлтĕртенпе çăвăнман, вăт, çавăнпа ман сухал вараланнă. Ну вăл ниме те пĕлтермест. Эпĕ паян сирĕнпе савăнма килтĕм.

**Ертÿçĕ:** Кучченеçсем те илсе килтĕн пуль?

**Кащей:** Илсе килтĕм, каялла илсе каятăп.

**Ертÿçĕ:** Асатте, мĕн калаçатăн эс? Вĕсене ачасем киле илсе каяççĕ. Эсĕ темĕн аташатăн. Асатте, чăрăша çутатма та вăхăт.

**Кащей:** А-а, тархасшăн. Так, ачасем, парăр-ха мана шăрпăк.

**Ертÿçĕ:** Мĕнле шăрпăк? Ачасен шăрпăк тытма юрамасть. Эсĕ мĕн, илемлĕ чăрăша çунтарса ярасшăн-им? Эпир чăрăш çинчи хунарсене кăна çутасшăн.

**Кащей:** Хунарсем?! Эпĕ хамах *(саннине тавăрать).* Кама хунар лартмалла? Тухăр кунта!

*(Чышкисене чăмăртаса сулкалашать, вăйне кăтартасшăн).*

**Юр пике:** Асатте, эсĕ чирленĕ пуль? *(Çамкине тытса пăхать).*

**Кащей:** Мĕскер эсĕ, хĕрĕм. Эсир хăвăр хунарсем çутмалла тесе каларăр вĕт. Çавăпа эпĕ пĕр-пĕр ачин куçне кăвакартасшăнччĕ. Чăрăш вара кăвак çутăпа ялкăштăрччĕ. Ну, юрĕ эппин. Çак чăрăш çутăлса кайтăр тесен ăна хăратмалла. Ры-ры-ры! *(хăратать).* Çук, çутмасть. Çыртмалла *(туратсене çыртнă пек тăвать).* Каллех çутмасть. Мĕн тăвас? Юрă юрламалла пуль? Елка, елка, çутусене çутсам. Юрласан та çутмасть. Вăйă вылямалла. Ачасем, выльăпăр-и? Камăн кăмăл пур? Кам маларах çак тенкел çине килсе ларать?

*(2 хут выляççĕ. Кащей чееленет, çур çултан каялла килсе ларать, тепринче тенкеле йăтса чупать).*

**Кащей:** Ах, ывăнтăм, кайса ларам-ха. Çук, пулмасть сирĕнпе, мороженăй кайса çием. *(Тухса каять).*

**Ертÿçĕ:** Юр пике, итле-ха, пирĕн Хĕл мучие тем пулнă – хăйне пачах урăхла

**Юр пике:** Асатте, айта ачасене сăвă каласа парар.

**Кащей:** Айта, эпĕ питĕ хавас.

**Юр пике:** Шурă юр пĕрчисем!

**Кащей:** Çĕтĕк пушмаксем!

**Юр пике:** Çутă çаврашкасем!

**Кащей:** Хытă çăкăр татăкĕсем!

**Юр пике:** Ай, ачасем, ку пирĕн Хĕл мучи мар. Хăвалăр ăна кунтан. Пире улталасшăн, юри Хĕл мучи пулса килнĕ.

*(Кащей кĕрĕкпе сухалне хывса пăрахать).*

**Кащей:** Тсс! Чарăнăр!
Елкăра савăнасшăн!
Кащейăн Çĕнĕ çулта
Йăлтах пулать урăхла!

*(Юр пикене йăтса тухса тарать).*

**Ертÿçĕ:** Ай, ай, ай! Мĕн тăвар? Кащей Юр пикене усал юмаха илсе кайрĕ. Кам пире пулăшĕ? Ăçта каяр? Кащейĕн кермене мĕнле тупар?

*(Елка хыçĕнчен Кушак тухать).*

**Кушак:** Мяу, мяу! Эпĕ кушак аçи.
Мяу, мяу! Эп килтĕм хăнана.
Мяу, мяу! Пурне те саламлатăп.
Мяу, мяу! Çĕнĕ çул уявĕ ячĕпе.

**Ертÿçĕ:** Сывă-и, кушак тусăм! Эсĕ пире пулăшаймастăн-и? Кащей кермене мĕнле çитме пулать-ши?

**Кушак:** Эсир унта мĕн тума каясшăн?

**Ертÿçĕ:** Кащей пирĕн Юр пикене вăрласа кайрĕ.

**Кушак:** Тăхтăр-ха, эпĕ часах. Эсир мана çакăнта кĕтĕр.

*(Елка айĕнче тем шырать, «Киндер сюрприз» шăккалат, çип çăмхи илсе тухать).*

**Ертÿçĕ:** Мĕн ку санăн?

**Кушак:** Айвансем! Юмах пĕлместĕрим? *(Утса çÿрет, çăмартана силлет).* Илтетĕр-и? Шалта сас парать. Унта Кащей вилĕмĕ выртать. Ку вара асамлă çăмха сире Кащейăн кермене патне илсе çитерет.

*(Çăмартапа, çăмхана ертÿçе парать).*

*Ертÿçĕ çăмхана алăк патне ывăтать, çăмха хыççăн тухса каять.*

*Кĕвĕ янраса каять. Зала Кащей Юр пикене аллинчен сĕтĕрсе пырать.*

**Кащей:** Чиперккеçĕм, кала пĕр сăмах. Эсĕ манăн пулма килĕшетĕн-и?

**Юр пике** *(урипе тапса)*: Нихăçан та!

**Кащей:** Эсĕ манăн çăлтăрăм. Эпĕ сана питĕ юрататăп! Саншăн тем тума та хатĕр. Юрă юрлама та, ташă ташлама та пултаратăп.

**Юр пике:** Çук! Кирлĕ мар.

**Кащей:** Эпĕ пур пĕрех ташлатăп. *(Кĕвĕпе ташлать. Ташланă вăхăтра Юр пикене канфет, пан улми парасшăн. Юр пике илмест).*

**Кащей:** Апла ларатăп, чĕнместĕп. Манран нимĕн те илместĕн. Эпĕ сана халь хăрататăп. *(Хăратать. Ертÿçĕ кĕрет).*

**Ертÿçĕ:** Ан хăра, Юр пике. Сана кÿрентерме памастпăр. Вĕçерт Юр пикене! Унсăр мĕнле Çĕнĕ çул пултăр?

**Кащей:** Çапла пулмасăр...
Памастăп Юр пикене!
Çĕнĕ çул Кащейăн
Пурте урăхла!

**Ертÿçĕ** *(çăмарта кăтартать)***:** Пăх-ха кунта! Вăт çăмарта, унта санăн вилĕмÿ.

**Кащей:** Ай, ай, ай! Хăтарăр!
Ан вĕлерĕр!
Мĕн кирлĕ, илĕр!
Мана çав çăмартана парăр.

**Ертÿçĕ:** Вăт куртăн-и, Кащей. Ырă усала яланах çĕнтерет.

**Кащей:** Сывă пулăр, эпĕ кайрăм *(тухса каять).* Эсир савăнăр!

**Юр пике:** Тавтапуç мана хăтарнăшăн.

**Ертÿçĕ:** Юр пике, часах Çĕнĕ çул, пирĕн Хĕл мучи халĕ те çук. Айтăр, ачасем, Хĕл мучие тепĕр хут чĕнер! Хĕл мучи, ау! *(Хĕл мучи кĕрет).*

**Хĕл мучи:** Сыв-и, ачасем! Сывă-и, хаклă хăнасем! Сире пурне те уяв ячĕпе саламлатăп.

**Ертÿçĕ:** Хĕл мучи, эсĕ мĕншĕн час килмерĕн. Эпир сана тахçанах кĕтетпĕр.

**Хĕл мучи:** Хам та васкатăп. Пыратăп юр ашса, сисмерĕм те шăтăка анса лартăм. Тухас тетĕп, ниепле те тухаймастăп. Уява каяссине пулмарĕ иккен тесе кулянса ларатăп шăтăкра. Юрать Кащея тĕл пултăм. Мана шăтăкра ларнине курчĕ те пулăшрĕ тухма, лайăх çул та кăтартрĕ. Акă эпĕ çитрĕм сирĕн пата. Мĕнле эсир пурте маттурсем, елка тата епле илемлĕ! Анчах вăл сирĕн çутатмасть. Эпĕ халех хамăн асамлă патакпа çутатăп (патакпа 3 хут шаккать). 1, 2, 3 – елка, çуттуна эс çут!

**Ертÿçĕ:** Тавтапуç Хĕл мучи! Сире савса юрă юрлар. *(«Шур сухаллă Хĕл мучи» юрă).*

**Ертÿçĕ:** Хĕл мучи, пирĕн ачасем сан çинчен тепĕр юрă та шăрантарасшăн.

*(«Самый добрый дедушка» юрă).*

**Хĕл мучи:** Ну, маттур иккен эсир, ачасем. Халĕ сирĕнпе выляс килет. Камăн-ха асамлă патак çинче ярăнна кăмăл пур?

*(«Патак çинче ярăнни» вăйă).*

**Ертÿçĕ:** Хĕл мучи, ывăнтăн пуль, кăштах кан-ха. Каннă вăхăтра ачасем сăвăсемпе савăнтарĕç. *(Ачасем сăвăсем калаççĕ).*

**Ертÿçĕ:** Ачасем питĕ ăста: сăвăсем те калаççĕ, юрăсем те юрлаççĕ. Итлесе пăх-ха тепĕр юррине.

*(«Танец около елки» юрă).*

**Ертÿçĕ:** Ачасем, Хĕл мучипе Юр пикене юрлаттарас килет-и сирĕн?

**Хĕл мучи, Юр пике:** Эпир хаваспах юрлатпăр.

*(Хĕл мучипе Юр пике юрлаççĕ).*

**Ертÿçĕ:** Тавтапуç сире. Лайăх юрларăр. Ташлас килсе кайрĕ.

*(«Переходная полька» ташă).*

**Ертÿçĕ:** Ачасем, Юр пикепе Хĕл мучие тата мĕнпе савăнтарар-ха? Ташăпа-и?

*(«Буги-вуги» ташă).*

**Ертÿçĕ:** Хĕл мучи, пирĕн ачасем санпа ташласшăн.

*(Ачасем хăнапа карталанса ташлаççĕ).*

**Ертÿçĕ:** Хĕл мучи, тепĕр ача садне (шкула) кайма васкамастăн-и-ха? Эпир санпа вăйă выляса.

*(«Шăнтатăп» вăйă).*

**Ертÿçĕ:** Хĕл мучи, кăштах кан-ха. Чупса ывăнтăн пуль? Эпир юрă юрлăпăр.

*(«Хаваслă Çĕнĕ çул» юрă).*

**Хĕл мучи:** Ăнлантăм, ăнлантăм, ачасем. Эсир манран кучченеç кĕтетĕр. Кучченеçĕ ман нумай. Ак çак хутаçа тултарса килтĕм вĕсене. Теприне, пысăккине, вара вăрман чĕр чунĕсем килсе паратпăр терĕç. Эпĕ тухса пăхам-ха *(тухса кучченеçсене йăтса кĕрет).* Ай, питĕ йывăр, кунта пурин валли те çитет.

**Ертÿçĕ:** Хĕл мучи, тăхта-ха, кучченеçе валеçиччен тепĕр юрă юрлар.

*(«До свиданья, Дед Мороз!» юрă).*

*(Кучченеç валеçеççĕ. Хĕл мучипе, Юр пикепе сыв пуллашаççĕ).*

**Нина КОЗЛОВА, воспитатель,**
**Алевтина ИВАНОВА, вĕрентекен.**
Елчĕк районĕ,
Кĕçĕн Таяпа шкулĕ.

# Хаваслă 2013 самант

## Пуç ватмăш



**Сылтăмалла:** 1. Геометри терминĕ. 8. Элĕк районĕнчи ял. 13. Чăваш апачĕ. 14. Ял хуçалăх техники. 15. Вăрманти вĕçен кайăк. 16. Тĕрке. 17. Ту таки. 18. Пулăçăн хатĕрĕ. 20. Чапаевăн пулеметчици. 22. Синоним мар. 23. Килĕшӳлĕх. 27. Студентсен вĕренӳ çулĕ. 28. Кăнтăрти çимĕç. 30. Уйрăлу. 32. Кама та пулин шанса çирĕплетни. 35. Вăл карма çăвара кирлĕ. 36. Çĕвĕçĕн «пуставĕ». 38. Пӳрт пайĕ. 40. Ăна ырлăх кирлĕ мар. 42. Ют çĕр-шыв ăсчахĕ, биолог. 43. Шырав вĕçĕ. 45. Юр барсĕ. 46. Раççейри халăх. 47. Пăхăнман «джигит». 49. Укçа паракан вырăн. 50. Патша пуканĕ. 52. Йог меслечĕ. 54. Пус. 57. Бразили писателĕ. 59. Шакла кавир. 61. Мифологири çĕлен. 63 Кăлпасси сорчĕ. 64. Раççейри юхан шыв. 65. Ата пайĕ. 67. Унта Одиссей пурăннă. 69. Яппунсен сăвă виçи. 72. Варли. 75. ... Кристи. 77. Килти выльăх. 78. Спортсмен çитĕнĕвĕ. 79. Пылак апат. 80. Унта тар кăларса çăвăнма-çапăнма çӳреççĕ. 81. Чăваш çыравçи. 83. Купăста тĕпĕ. 85. Хытă хут. 88. Гана çĕр-шывĕн тĕп хули. 91. Тинĕсри чĕр чун. 93. Вăл чăвашсен журналĕ пулнă. 95. Кăнтăрти курорт-хула. 97. Литература жанрĕ. 98. Сĕкĕшме юратакан выльăх. 99. Хими шĕвекĕ. 102. Йăрăс пӳллĕскер. 103. Машинсем çапăнни. 104. Карап «склачĕ». 106. Сухан сорчĕ. 108. Виçе. 109. Малярăн ĕç хатĕрĕ. 112. Студентсен «ĕççийĕ». 114. Темĕн те тăвакан. 117. 16 килограмм. 119. Асап. 122. Тĕксе калани. 123. Китайри йывăç. 125. Вакх, Дионис, ... 126. ... медаль. 127. Çур çĕр халăхĕсен атти. 128. Тарас Бульба ывăлĕ. 130. Вăтам Азири ял. 131. Турра ĕненни. 132. Çĕр-шыв пуçлăхĕ. 133. Дельфин. 134. Аваллăха тĕпчекен.

**Аялалла:** 2. Санкт-Петербургри хоккей команди. 3. Пахча çимĕçри им-çам. 4. Вĕçме пĕлмен кайăк. 5. Унта вăл ĕлĕк çӳренĕ. 6. Пулă. 7. Тракт çинчи «таксист». 8. Вĕри апат. 9. Çурт кăшкарĕ. 10. Теннисист хатĕрĕ. 11. Сиенлĕ хурт-кăпшанкă. 12. Пушă. 14. Хирĕçӳ. 13. Лакса ларнă... 21. Сас-чĕвĕ итлекен. 24. Чăваш халăх писателĕ. 25. Утăулăм вырăнĕ. 26. ... Раман. 29. Мечĕк вăйăран тухни. 31. Сехет пайĕ. 32. Моряксен терминĕ. 33. Сцена çинчи çутă. 34. Кăмăл туса. 37. Ӳкерчĕклĕ пуç ватмăш. 39. Матроссен хĕрӳ вăхăчĕ. 40. Спортсмен. 44. Шахмăтра çĕнтерейменни. 46. Вырăссен паллă вĕçевçи. 48. Адам арăмĕ. 49. М.Горький канма юратнă утрав. 51. Хими элеменчĕ. 52. Кавказри ял. 53. Йăвашскер. 55. Пан улми сорчĕ. 56. Хаклă йышши чул. 58. Мунча хатĕрĕ. 60. Лапландире пурăнакан. 62. Çурхи ĕç. 66. Тĕлĕнтермĕш. 68. Куçкĕски. 70. Лупас пайĕ. 71. Унта купăста йӳçĕ теççĕ. 73. Литвари юхан шыв. 74. Ăна АПШ тапăнса инкек кăтартрĕ. 76. Архитектура пайĕ. 82. Юмахри çурăк ... 84. Пушар хыççăн ăна çапмаççĕ. 86. Вăл Ахилпа пĕрле çапăçнă. 87. Ĕлĕкхи доллар. 89. Вăрмар районĕнчи ял. 90. Сутуçăсенчен укçа-тенкĕ шăйăрни. 91. Çĕр-шыв старости. 92. Халăх хăпартнă чугун çул. 94. В.Высоцкий мăшăрĕ. 95. Кавказри юхан шыв. 96. Ĕç укçин пĕр пайĕ. 100. Вĕçен кайăк. 101. Ял пайĕ. 104. Юлташ. 105. Ăна индеецсем тăхăнаççĕ. 107. Выльăх апачĕ. 109. Çур çĕрти хула. 110. Хăйра. 111. Конькипе ярăнакан Раççей спортсменки, Олимп чемпионĕ. 113. Вырăс космонавчĕ. 115. Авалхи хĕç-пăшал. 116. «Нарспи» хайлаври сăнар. 118. Артистсен ушкăнĕ. 120. Комсомольски районĕнчи ял. 121. Вăл çиçĕм хыççăн пулать. 124. Коллективри хастар ушкăн. 123. «...танкиста» (юрăран).

........................................................................................

Ват пират нумай çаратнă, пурлăхне кайран пытарнă. 20 вырăнта вĕсем, халь вара шыра та туп. Мула ăçта пытарнине кашни йĕркепе колонкăсенчен пĕлме пулать. Цифрăсемпех палăртнă. Шыраса тупнисене кăтартсах панă. Çакна çеç каламалла, пурлăх сунтăхĕсем пĕр-пĕрин кĕтесĕпе те сĕртĕнме пултараççĕ.




## Цифрăсем купа тулли, хăйĕн вырăнĕ кашнин.




| | | | |
|---|---|---|---|
| 23 | 817 | 6174 | 9402 |
| 36 | 1248 | 6297 | 9510 |
| 44 | 1592 | 6650 | 9762 |
| 76 | 2074 | 6767 | 569081 |
| 382 | 2173 | 7492 | 748504 |
| 436 | 3366 | 7764 | 821867 |
| 477 | 4685 | 8431 | 882730 |
| 488 | 5138 | 8724 | |
| 724 | 5788 | 8904 | |



**Сылтăмалла:** 1. Шĕвĕрккесен журналĕ. 3. Ĕлĕкхи пуян – ... хуçа. 4. Шахматра çĕнтерни. 5. Литература жанрĕ. 7. Вăрманти чĕр чун. 9. Тапăнни. 10. Талăк. 11. Çырмалли хатĕр.

**Аялалла:** 2. Йывăç пайĕ. 3. Вăл Çĕпĕре çĕнсе илнĕ. 6. Кĕрпе. 8. Вĕренӳ пӳлĕмĕ. 9. Сехет пайĕ.

*Николай КРАСНОВ (Йĕпреç районĕ) хатĕрленĕ.*